Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1938 ИЙУН 24 ЕРНЕКУН 143 (4956) №

ЧӐВАШ КОММУНӖ

21-мӗш ҫул тухать — *ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗпе Тӗпӗҫтӑвкомӑн хаҫачӗ* — Пӗр №-рӗ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСӖ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторӑн 0—67, Ред. заместителӗн 0—88, Редакци секретарӗн 4—40, Дежурнӑйӑн 6—23

РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗсен суйлавӗ—пӗтӗм халӑх уйавӗ

Коммуниссемпе партире тӑманнисен Сталинла блок кандидачӗсемшӗн сасӑлӑр!

Тата тепӗр кунтан—ийунӗн 26-мӗшӗнче — РСФС Республикинчи пӗтӗм халӑхӑн праҫникӗ. Ӳссе ҫӗчӗкленсе ҫитӗнекен чӑваш халӑхӗн те ҫак кун—аслӑ савӑнӑҫ кунӗ. Ҫак чаплӑ куна чӑваш халӑхӗ икӗ уйӑх кӗтсе хатӗрленчӗ. Суйлава ҫӗнтерӳлӗ, пысӑк йӗркелӗхпе, организациллӗхпе иртерме хатӗрленнӗ май, коммуниссемпе партире тӑманнисен Сталинла блокӗ татах та ҫирӗпленчӗ.

ССР Сойузӗн Верховнӑй Советне суйланӑ чухнехи пекех, ҫитес РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗсен суйлавӗсенче те большевиксен партийӗ суйлава партире тӑман рабочисемпе, хресченсемпе, служӑшчисемпе, интеллигенципе пӗрле блок, сойуз туса тухать. Вӑл блок Аслӑ Октябӗрти Социалисӑмлӑ революцинчи, социалисӑмлӑ общӗства строителствинчи кӗрешӳре шӑранса пиҫӗхнӗ. Коммуниссемпе партире тӑманнисен суйлав блокӗ Сталинла Конституцийӗ кӗрешсе илнӗ никӗс ҫинче пулнӑ. РСФСР тата ЧАССР Верховнӑй Совечӗсене депутата суйлама регистрациленӗ кандидатсене—коммуниссене те, партире тӑманнисене те—савӑтсенче рабочисемпе служӑшчисен, йалсенче—колхозниксемпе йединоличниксен пӗрлехи пухӑвӗсем коммуниссемпе партире тӑманнисен суйлав блокӗ тӑрӑх тӑратнӑ.

РСФСР тата ЧАССР Верховнӑй Совечӗсене депутата суйлама тӑратнӑ кандидатсем пурте коммуниссемпе партире тӑманнисем пӗрле тӑратнӑ кандидатсем, партире тӑман кашни кандидат—коммуниссенчен те тӑратнӑ кандидат, партире тӑракан кашни кандидат—партире тӑманнисенчен те тӑратнӑ кандидат. Партире тӑракансемпе партире тӑманнисен кандидачӗсем халӑхӑн чи лайӑх ывӑл-хӗрӗсем, тӑван ҫӗршыва паранӑ ҫынсем.

Чӑваш халӑхӗ пысӑк хавасланпа Чӑваш республикӗн Верховнӑй Советне депутата суйлама халӑхсен аслӑ ҫулпуҫне Сталин йулташа тата унӑн ҫывӑх соратникӗсене, халӑхӑн йуратнӑ лидерӗсене—Молотӑв, Каганович, Калинин, Ворошилӑв, Микойан, Андрейӗв, Йежов тата Жданӑв йулташсене кандидата палӑртрӗ. Чӑваш республикӗн Верховнӑй Советне депутата суйлама 96 кандидат тӑратнӑ, вӗсенчен коммуниссем—64, комсомолецсем—9, хӗрарӑмсем—25. Вӗсем хушшинче тӗрлӗ професиллӗ ҫынсем: рабочисем, колхозниксем, инженерсем, врачсем, агрономсем, учителсем, парти, совет тата урӑх ӗҫсенче ӗҫлекен работниксем, ӗҫре тӗрӗсленнӗ ҫынсем.

РСФСР Верховнӑй Советне депутата суйлама палӑртнӑ 7 кандидат та ҫавӑн пек ҫынсемех.

Суйлавҫӑсем чаплӑ йышлӑ митингсенче, пухусенче хӑйсен округӗсенчи кандидатсемпе тӗл пулса лайӑх паллашрӗҫ. Ку митингсенче, пухусенче Чӑваш республикӗнчи ӗҫхалӑхӗ хамӑрӑн тӑван социалисӑмлӑ ҫӗршыва хӗрӳлӗ йуратнине, Ленин—Сталин партине, Совет правителствине чӗререн парӑннине кӑтартрӗ. Коммуниссемпе партире тӑманнисен блок кандидачӗсене пӗтӗм чӑваш халӑхӗ пӗр шухӑшпа хавасланса, савӑнса йышӑнчӗ. Суйлавҫӑсем кандидатсемпе тӗл пулни—суйлавҫӑсен чаплӑ савӑнӑҫӗ пулса тӑрать, вӗсен пурнӑҫӗнчи нихҫан манми кун шутне кӗрсе йулать. Кандидатсемпе тӗл пулса калаҫнӑ чух, нумай суйлавҫӑсем—ваттисем те, ҫамрӑккисем те, хӗрарӑмсем те—нумайӗшӗ халиччен халӑхӑн пысӑк пухӑвӗсенче тухса калаҫман ҫынсем—хӑйсен шухӑшӗсене пит те ҫыпӑҫулӑ, паха сӑмахсемпе кандидатсене саламласа, кандидатсемшӗн сасӑлама хӗрӳлӗн чӗнеҫҫӗ. Пур округра та, пур участкӑра та суйлавҫӑсем хӑйсен кандидачӗсене ырлаҫҫӗ, вӗсене шанма тивӗҫлӗ ҫынсем, теҫҫӗ. Кандидатсемпе тӗл пулса калаҫнӑ чух пур ҫӗрте те чӑваш халӑхӗн ӗлӗкхи, Октябӗр революцичченхи чӑтма ҫук йӑвӑр, хӗн хурлӑ пурнӑҫне суйлавҫӑсем уйрӑмӑнах аса илеҫҫӗ. Большевиксен партине, Сталин йулташа, Совет правителствине, телейлӗ те савӑнӑҫлӑ социалисӑмлӑ пурнӑҫ патне илсе пынӑшӑн, Сталинла Конституци панӑшӑн, 17-мӗш ҫул мирлӗ, лӑпкӑ пурнӑҫпа усранӑшӑн, тӑван ҫӗршыва сутакансене—троцкиссене, бухаринецсене, буржуалӑ-националиссене ҫапса аркатнӑшӑн тав тӑваҫҫӗ. Чӑваш ӗҫҫыннисем большевиксен партийӗн шалти тата тулашри политикине ырлаҫҫӗ.

Ҫавӑнпа та ӗнтӗ коммуниссен партийӗ РСФСР тата ЧАССР Верховнӑй Совечӗсен суйлавӗсенче коммуниссемпе партире тӑманнисен Сталинла блок кандидачӗсемшӗн пирӗн ҫӗршыври пӗтӗм рабочисем, хресченсем тата интеллигентсем сасӑлассине шанса тӑрать.

Кашни суйлавҫӑ хӑй округӗнче регистрациленӗ кандидатшӑн сасӑланине большевиксен партишӗн, пирӗн тӑван ҫӗршыва малала та чечеклентерессишӗн, совет ҫӗршывне никам ҫӗнтерейми вӑй тӑвассишӗн, мирлӗ пурнӑҫшӑн, пуйан та культуралӑ пурнӑҫшӑн, пӗтӗм халӑх телейӗшӗн сасӑлать.

Ийунӗн 26-мӗш кунӗнче РСФСР халӑхӗ, ҫав шутрах Чӑваш республикӗнче пурӑнакан халӑхсем те, хӑйсен моральлӗ-политикӑлӑ пӗрлӗхне тепӗр хут кӑтартса, Совет ҫӗршывӗн тӑшманӗсене совет халӑхӗ никам ҫӗнтерейми вӑй пулса тӑнине хӑрушшӑн, хӑйарран астутарӗҫ.

Ҫитес суйлава тата ӳсӗмлӗрех, йӗркелӗрех ирттерни вӑл—вӑрҫӑ чӗртсе йаракан фашиссене, вӗсен агенчӗсене—троцкиссене, бухаринецсене, буржуалӑ-националиссене хыттӑн ҫапни пулать.

Камшӑн хаклӑ пирӗн Октябӗрти Социалисӑмлӑ аслӑ революци кӗрешсе илнисем, кам пирӗн чечекленсе пыракан социалисӑм ҫӗршывне йуратать, кам тата унӑн малали ӳсӗмӗсемшӗн тӑрӑшать—ҫав ийунӗн 26-мӗшӗнче коммуниссемпе партире тӑманнисен блок кандидачӗсемшӗн сасӑлать.

Сталин йулташ суйлавҫӑсен суйлав умӗнхи пухӑвӗнче 1937 ҫулхи декабӗрӗн 11-мӗшӗнче каланӑ чаплӑ сӑмахӗнче халӑх хӑйӗн кандидачӗсем умне ҫакӑн пек требовани лартмала терӗ:

„Суйлавҫӑсем, халӑх хӑйсен депутачӗсенчен ҫакна ыйтмала: депутатсем хӑйсен задачисен ҫӳлӗшӗнче тӑччӑр, вӗсем хӑйсен ӗҫӗнче политикӑлӑ обывателсен картне анса ан ларччӑр, вӗсем Ленин сӑнарлӑ политикӑлӑ деятелсен вырӑнче тӑччӑр, вӗсем Ленин пекех йар-уҫҫа та паллӑ деятелсем пулччӑр, вӗсем Ленин пекех кӗрешӳре нимрен хӑраман тата халӑх тӑшманӗсене нимӗн хӗрхенмен ҫынсем пулччӑр, вӗсем ӗҫ йӑвӑрланма пуҫласан, тавракурӑмра мӗнле те пулин хӑрушлӑх паларса тухма пуҫласан кирек мӗнле хӑраса ӳкесрен те, кирек мӗнле хӑраҫа ӳкес пеккинчен те ирӗклӗ пулччӑр, вӗсем кирек мӗнле хӑраса ӳкес пеккинчен те Ленин пекех ирӗклӗ пулччӑр, кӑткӑс ыйтусене татса панӑ ҫӗрте пур йенлӗ ориентаци тата пӗтӗм плюссемпе минуссене пур йенчен те учота илмелле ҫӗрте вӗсем, Ленин пекех, аслӑ та васкамасӑр тӑвакансем пулччӑр, вӗсем Ленин пекех тӗрӗс те тӳрӗ кӑмӑллӑ пулччӑр, вӗсем хӑйсен халӑхне, ӑна Ленин йуратнӑ пекех, йуратчӑр“.

Сталин йулташ халӑх кандидачӗсене наказ пани пӗтӗм совет халӑхӗн наказӗ пулать.

Чӑваш республикӗнчи ӗҫхалӑхӗсем кандидатсем умне ҫак наказсене тӑратса халӑхӑн аслӑ шанчӑкне вӗсем тивӗҫлине хисепе илсе, ийунӗн 26-мӗшӗнче суйлав урнисем патне пырса коммуниссемпе партире тӑманнисен блок кандидачӗсемшӗн хаваслӑн, пӗр ҫын пек сасӑлӗҫ.

Полици ӗҫсӗр тӑрса йулнӑ рабочисем ҫине тапӑннӑ

Ванкуверте (Канадӑ) ӗҫсӗр тӑрса йулнисем пин ҫын ытла пӗр уйӑх хушши ӗнтӗ тӗп почтамт ҫурчӗпе картинӑ галлерейне йышӑнса тӑнӑ, вӗсем ӗҫсӗр тӑрса йулнӑ пирки паракан пособисене ӳстерме ыйтнӑ. Полици, чӳречесем витӗр куҫҫульне йухтаракан газсемпе тултарнӑ бомбӑсем пӑрахса, рабочисене урама хӗссе кӑларнӑ та, унта вара вӗсем ҫине тапӑннӑ, чукмарсемпе хӗненӗ. Ӗҫсӗр тӑрса йулнисенчен 31 ҫын аманнӑ, полицисенчен 3-шӗ аманнӑ. (ТАСС).

М. И. КАЛИНИН йулташ сӑмахӗ

Ленинград хулинчи Ҫвердловски суйлав округӗнче „Севкабель“ савӑтри рабочисен, инженерлӑ-техниклӑ работниксен тата служӑшчисен суйлав умӗнхи пухӑвӗнче 1938 ҫулхи ийунӗн 20-шӗнче каланӑ

Йултаҫсем! Пирӗн ҫӗршывра кандидатсемпе суйлавҫӑсем хушшинче пӗр пӗрне калама ҫук пысӑккӑн шанса тӑни пуҫпулса тӑрать. Епӗр пӗр пӗринчен тимлӗн ыйтса тӗпчениччен ытларах, пӗр пӗрине нумайрах саламлатпӑр. Ҫакна уйрӑмах суйлавҫӑсем Верховнӑй Совета суйлама тӑратнӑ хӑйсен кандидачӗсем ҫине мӗнле пӑхни пирки калама йурать. Ҫапах та есӗр, манӑн суйлавҫӑсем, мана ҫакӑн пек ыйту пама тивӗҫлӗ: епӗ, РСФСР Верховнӑй Советне депутата суйлама палӑртнӑ кандидат, мӗн тӑвап-ха, РСФСР Верховнӑй Советӗнче епӗ мӗнле ҫулйӗр тытса пырӑп?

Пирӗн ҫӗршывра суйлавсем кирек хӑш капиталисӑмлӑ ҫӗршыврinchen те пачах урӑхла пулса иртеҫҫӗ. Капиталисӑмлӑ ҫӗршывсенче пире: сирӗн патӑрта суйлавсем-и вара вӗсем, сирӗн патӑрта пӗр кандидат ҫеҫ баллотировкӑна тӑрать,—тесе калаҫҫӗ. Ҫапла каласа вӗсем пирӗн суйлавсен ҫистемине лапӑртама тӑрӑшаҫҫӗ. Капиталиссем пирӗн чӑн пурнӑҫӗнчен тӗрӗссине калама шикленеҫҫӗ.

Ҫав чӑн пурнӑҫ мӗнлескер-ха? Рабочи клас тата ӗҫ хресченӗсем, колхозниксем, пирӗн ҫӗршывӑн хуҫисем пулса тӑраҫҫӗ. Ҫак вӑл—пурнӑҫра чӑн пурри. Пирӗн ҫӗршывра ӗҫҫыннисен икӗ класӗ пур, вӗсем никама та експлоатацилемеҫҫӗ, вӗсем хӑйсем пуйанлӑхсене тӑваҫҫӗ; паллах ӗнтӗ, вӗсем хушшинче тачӑ сойуз пур тата кӗвӗҫсе тупӑшни пулма та пултараймасть. Рабочи клас гегемон пулса тӑчӗ, урӑхла каласан, вӑл ӗнтӗ материаллӑ хаклӑхсене хӑйӗн аллинче тытса тӑракан ҫеҫ мар, тата пӗтӗм ӗҫҫыннисен шухӑш-кӑмӑлӗсем ун майлӑ.

Верховнӑй Совета депутата суйламали кандидата мӗнле палӑртаҫҫӗ-ха? Йалта пулсан—ӑна колхоз хресченӗсем палӑртаҫҫӗ; хулара пулсан—ӑна рабочисем тата интеллигенци палӑртаҫҫӗ, рабочи клас пӗтӗм ӗҫҫыннисен шухӑшӗсене палӑртса тӑнӑ май, пӗтӗм халӑх рабочи клас идейисем хыҫҫӑн пырать.

Епӗ, РСФСР Верховнӑй Советне депутата суйлама палӑртнӑ кандидат, рабочи клас ирӗкне пурнӑҫа кӗртессине хам мӗнле ӑнланатӑп-ха? Хамӑн мӗн пур ӗҫсенче кашни ыйтӑва татса панӑ чухне, епӗ йаланах пӗтӗм рабочи класӑн интересӗсене асра тытса ӗҫлесе пыратӑп тата малашне те пӗтӗм рабочи класӑн интересӗсене асра тытса ӗҫлесе пырӑп. (Тӑвӑллӑн алӑ ҫупаҫҫӗ).

Рабочи класӑн ҫак пӗтӗмӗшле интересӗсене кам палӑртса тӑрать, вӗсене кам чи уҫӑмлӑн каласа парать? Пирӗн ССР Сойузӗнчи рабочисенчен сахалтан 99 проценчӗ—рабочи класӑн тата мӗн пур ӗҫҫыннисен пӗтӗмӗшлӗ интересӗсене тӗп палӑртса тӑраканӗ коммунисла парти пулса тӑрать,—тесе калаҫҫӗ, коммунисла парти вӑл интересӗсене палӑртса тӑрать, вӗсене хӳтӗлет, рабочи клас пӗтӗм тӗнчипе татӑклӑн ҫӗнтерме тӗрӗс ҫул кӑтартса пырать. (Тӑвӑллӑн алӑ ҫупаҫҫӗ). Епӗ ҫак партин ывӑлӗ пулса тӑратӑп. (Нумайччен алӑ ҫупаҫҫӗ). Сирӗнтен хӑшпӗри, тен: ох, йепле ватӑ ывӑл!—тесе шухӑшлӗҫ. (Кулаҫҫӗ, алӑ ҫупаҫҫӗ). Ҫапах та, йулташсем, мана коммунисла парти ҫуратса ӳстернӗ, ҫавӑнпа епӗ большевиксен коммунисла парти членӗ ҫеҫ мар, тата епӗ унӑн ывӑлӗ те пулса тӑратӑп. (Алӑ ҫупаҫҫӗ) Пирӗн партин шанчӑклӑ членӗ пулассине епӗ хамӑн тӗп тата таса обйазаннӑҫ тесе шутлатӑп. (Тӑвӑллӑн алӑ ҫупаҫҫӗ).

Коммунисла парти вӑл—рабочи класӑн пӗртен пӗр чӑн-чӑн партийӗ. (Алӑ ҫупаҫҫӗ). Коммунисла парти—пусмӑрта пурӑнакансене пурне те хӳтлекен пӗртен пӗр парти; коммунисла парти—пусмӑрта пурӑнакансене пурне те ирӗке кӑларассишӗн вӗҫне ҫитиех кӗрешекен пӗртен пӗр парти. (Алӑ ҫупаҫҫӗ).

Хамӑн пӗтӗм политикӑлӑ ӗҫре епӗ Сталин йулташ хыҫҫӑн—ҫулпуҫ хыҫҫӑн, теоретик хыҫҫӑн, пролетарилӗ руководител хыҫҫӑн пынӑ, ун хыҫҫӑн пыратӑп. Епӗр пӗлетпӗр—епӗр Сталин йулташ йертсе пынипе кӗрешетпӗр, ӗҫлетпӗр, ҫавӑнпа пирӗн кӗрешӳ ытларах результатсем парать. (Тӑвӑллӑ овацисем: Аслӑ Сталина „урра!“ тесе кӑшкӑраҫҫӗ).

Халь ӗнтӗ, суйлавсем умӗн, епӗ сире тӳрех ҫапла калатӑп: хамӑн ӗҫсенче епӗ йаланах большевикла парти хыҫҫӑн пырӑп, Сталин йулташ хыҫҫӑн пырӑп. Ҫапла каласа епӗ рабочи класӑн ирӗкне палӑртса паратӑп пулӗ, тесе шухӑшлатӑп. (Тӑвӑллӑн алӑ ҫупаҫҫӗ).

Ҫак трибунӑ ҫинчен сынсем—пирӗн ҫӗршывра пурӑнма хаваслӑ, тесе каланине есӗр пӗр хутчен мар илтнӗ пулмала. Ҫак сӑмахсене алӑ ҫупса йышӑнаҫҫӗ, манӑн шутпа, питӗ тӗрӗс алӑ ҫупаҫҫӗ.

Ҫак хаваслӑхӑн тымаррисем ӑҫта-ха, мӗнтен килет вӑл хаваслӑх тата капиталисӑм тӗнчи мӗншӗн ҫавӑн пек хавасланма пултараймасть?

Йултаҫсем, епӗр хальхи вӑхӑтра Америкӑри Пӗрлешӳлӗ Штатсенчен чылай чухӑнрах пулмала-ха. Ку вӑл факт, ӑна епӗр тунмастпӑр. Вӗсен автомобилсем кӑна пирӗннинчен темиҫе хут нумайрах. Анчах Америкӑра мӗн пур пуйанлӑхсен хуҫисем Моргансемпе ытти капиталиссем пулса тӑраҫҫӗ. Епӗр чухӑнрах, анчах ун вырӑнне пирӗн мӗн пур, ҫавсен пурин те хуҫисем—рабочи класпа хресченсем пулса тӑраҫҫӗ. (Тӑвӑллӑн алӑ ҫупаҫҫӗ). Хуҫа пулни, хут ытла пуйан хуҫах пулмасан та, батрак пулнинчен, хут чи пуйан господин патӗнчи батрак пулнинчен ҫапах лайӑхрах та хаваслӑрах. Пуйан господин патӗнче батрак пулса пурӑнасси—вӑл чухӑнрах пулсан та, ҫапах хуҫа пулнинчен начартарах. (Алӑ ҫупаҫҫӗ).

Ҫавӑн пек ӗнтӗ, калас пулать, ҫак ыйтӑвӑн материаллӑ йенӗ. Тата унӑн ҫӳлӗ-идейалӑ йен те пур, ҫав йен вӑл, тӗрӗссипе илсен, нумай мӗлйунлӑ халӑха чӗрӗ вӑй парать те ӗнтӗ, кашни ҫынӑн пурнӑҫне илемлетет. Епӗр пурӑнас тесе кӑна пурӑнмастпӑрҫке-ха, епӗр тата малашне пуласси шӗн пурӑнатпӑр, епӗр коммунисӑм пӗтем тӗнчипе татӑкланах ҫӗнтерессишӗн пурӑнатпӑр. (Нумайччен тӑвӑллӑн алӑ ҫупаҫҫӗ). Ҫак идейалӑ чӗрӗ вӑй, ҫак ҫӳлӗ тӗллевсем, кашни тӳрӗ кӑмӑллӑ рабочи умӗнче, кашни специалис умӗнче тӑракан, арҫын умӗнче те, хӗрарӑм умӗнче те тӑракан ҫӳлӗ тӗллевсем, пирӗн ҫамрӑксем туйса йышӑнакан ҫав ҫӳлӗ тӗллевсем пирӗн пурнӑҫа илемлетеҫҫӗ, ырӑ тӗс параҫҫӗ, ӑна ҫӳлӗ-идейалӑ тӑваҫҫӗ. Ҫав ҫӳлӗ тӗллевсем пире—мӗнле лайӑх пирӗн пурнӑҫ!—тесе калама хавхалантаракан електричӗствапа аварлантараҫҫӗ. (Тӑвӑллӑ овацисем).

Епӗр авангард пулса тӑнине, епӗр пусмӑрта пурӑнакан етемлӗхӗн ударлӑ бригади пулса тӑнине ӑнланса илни, епӗр малта пынине, ҫул уҫса пынине, хамӑра вальли ҫеҫ мар, тата мӗн пур етемлӗхе вальли коммунисӑм патне кайма ҫул хывса пынине ӑнланса илни,—ҫавна ӑнланса илни вӑл пире калама ҫук пысӑк, никам аркатай-

тертленмеле килнӗ, вӑл ҫеҫ мар, тата ҫавна тума пархатарлӑ, тӳрӗ кӑмӑллӑ нумай пролетарисемпе хресченсен пурнӑҫне те памала килнӗ. Ҫавӑнпа пирӗн хамӑрӑн тӑван ҫӗршыва тата хӑватлӑрах тумала, социалисӑм тӗнчине вӑйлатмала тата хамӑрпа тӑшманла тӗнчене вӑйсӑрлатмала. Ҫакӑ вӑл пирӗн тӗп задачӑ пулса тӑрать.

Социалисӑм строителствине вӑйлатасси пӗр йӗрпе ҫеҫ пымасть. Социалисӑм строителстви нумай йенлӗ тата тӑшмансемпе кӗрешесси те ҫавӑн пекех нумай йенлӗ. Пирӗн тӑшман капиталисӑмлӑ тӗнче пулса тӑрать. Ҫӗр чӑмӑрӗн пӗр улттӑмӗш пайӗнче социалисӑмлӑ строй пуррипе, пирӗн патӑрта капиталисӑма пӗтерниpe килӗшмест вӑл. Вӑл ҫакна хирӗҫ протеслет ҫеҫ те мар, тата пире пӗтерсе хурасшӑн тӑрӑшать. Совет влаҫне сыхласа усрама, малашне те пӗтӗм тӗнчери пролетариатӑн ударлӑ бригади пулма, пирӗн хамӑрӑн ҫӗршыва тата ытларах тӗреклетмеле. Ҫавна тума тата нумай та нумай ӗҫлес пулать. Пит нумай!

Ҫав ӗҫ вӑл, мӗн пулать-ха, мӗн тӑвассишӗн тӑрӑшмала пирӗн? Пирӗн кашни гектар ҫӗр йепле пулсан та ытларах продуктӑсем патӑр тесе тӑрӑшмала. Ҫакӑ пулать те ӗнтӗ Совет государствине тӗреклетни тата капиталисӑмлӑ тӗнчене ҫапни. Кашни савӑт, кашни хапрӑк, кашни цех хӑйсен плами вӑй парать. (Нумайччен алӑ ҫупаҫҫӗ).

Епӗр капиталисӑмлӑ йӗри-тавралӑхра пурӑнатпӑр, епӗр кӗрешсе ҫӗнсе илнисене тума пирӗншӗн ҫамӑл пулмарӗ. Ҫавна есӗр хӑвӑр та пӗлеттӗр. Пирӗн хальхи вӑхӑтра мӗн пуррине тума пирӗн калама ҫук пысӑк хӗн-хур тӳсмеле, пысӑк вӑй хумала тата ӗҫлесе нӗсене тултарни тата иртерсе тултарни кирлӗ. Государствӑ планне тултарни, паллах, тӑшмана вӑйсӑрлатать тата хамӑрӑн хӑвата ӳстерет.

Пирӗн ҫавӑн пекех тата продукци пахалӑхне лайӑхлатмала. Акӑ кунта 2 пин ҫын ытла пухӑннӑ. Вӗсенчен продукци пахалӑхӗ йапӑххи пирки, ҫулталӑк хушшинче пӗр хутчен те пулсан ӳпкелешменни пӗр ҫын та ҫук пулӗ, тесе шутлатӑп епӗ. (Кулаҫҫӗ). Анчах, йулташсем, кам туса кӑларать-ха вӑл продукцине? Капиталисӑмлӑ тӗнчере: акӑ, пӳтсӗрсем, ҫӗрӗк йапала сутса пуйасшӑн!—тесе калама пулать. Пирӗн патра мӗнле? Пирӗн патра начар пахалӑхлӑ продукци тирпейлӗ ӗҫлемен пирки пулать, тесе ҫеҫ ӑнланмала. Хӑшпӗрисем ку тарихчченех калаҫҫӗ: „Йуратьҫке, ҫапла та тӑхӑнса ҫӳрӗҫ, ҫапла та ҫийӗҫ...“ теҫҫӗ. Кам тӑхӑнса ҫӳрет, кам ҫийет? Епӗр хамӑрах.

Ҫапла ӗнтӗ, йулташсем, пирӗн продукци пахалӑхӗшӗн кӗрешес пулать. Есӗ хӑв лайӑх пахалӑхлӑ продукци туса кӑларма вӗренсе ҫитсен тин тепӗринчен те лайӑх пахалӑхлӑ продукци ыйтма пулать. Пахалӑхшӑн кӗрешни те—вӑл Совет влаҫне малала тӗреклетессишӗн кӗрешни пулать.

Пахалӑхшӑн кӗрешесси рабочисен кӗрешӗвӗ пулмала, ҫакӑн пирки профсойусен уйрӑмах тимлес пулать. Совет продукцин пахалӑхӗ чи пысӑк пахалӑх пулмала. Илер пирӗн продуктӑсене мӗнле чӗркенине. Вӑл ытлашши капӑр пулмала мар, анчах ҫапах та илемлӗ пулмала. Илемлӗхе тата искусствӑна театӑрсенче, консерваторисенче, музыкӑлла йе художествӑлӑ студисенче кӑна мар хӑнӑхса пыратпӑр. Илемлӗх туйӑмӗ, искусствӑна ӑнланасси—есӗ илемлӗ йапаласем куратӑн тата вӗсемпе усӑ куратӑн пулсан—кулленхи пурнӑҫра пулса пыраҫҫӗ. Епӗр, ашшӗсемпе амӑшӗсем, илемлӗхпе искусствӑна ӑнланас тӗлӗшрен пирӗн ачасем хамӑртан ҫӳлтерех тӑччӑр, тетпӗр. Ҫавӑнпа та продукци туса хатӗрленӗ чухне илемлӗхпе искусствӑшӑн кӗрешес пулать.

РСФСР Верховнӑй Совет депутачӗ пулнӑ май, епӗ ҫак задачӑсене пурнӑҫа кӗртес ҫӗрте мӗн пур вӑйа хурӑп. Манӑн мӗн пур суйлавҫӑсем ҫав ӗҫе вӑй ҫитнӗ таран хутшӑнӗҫ, тесе шанса тӑратӑп епӗ. (Нумайччен алӑ ҫупаҫҫӗ).

Йулашкинчен мана ҫакна сунма ирӗк парӑр: ийунӗн 26-мӗшӗнче пирӗн округ ытти суйлав округӗсен хыҫӗнче сӗтӗрӗнсе ан пытӑрччӗ. Епӗ, паллах ӗнтӗ, пирӗн округ кайра мар, малта пултӑрччӗ, тесе ӗмӗтленетӗп. (Кулаҫҫӗ, алӑ ҫупаҫҫӗ). Вӑл ҫавӑн пек пултӑр тесе тӑрӑшӑр, йулташсем. (Алӑ ҫупаҫҫӗ). Есӗр ҫавна тусан, вӑл та совет стройне тӗреклетмели елементсенчен пӗри пулать, вӑл та вара пӗтӗм тӗнчери капитала ҫапни пулать. (Тӑвӑллӑн алӑ ҫупни овацине куҫать. Пурте ура ҫине тӑраҫҫӗ.—Пирӗн кандидата Михаил Иванӑвич Калинина „урра!“—тесе кӑшкӑраҫҫӗ).

Суйлав умӗнхи социалисӑмлӑ ӑмӑрту

РСФСР, Украинӑ, Белоруҫҫи, Таджикистан, Узбекистан, Туркмени, Киргизи, Казахстан, Азербайджан тата вӗсен составӗсене кӗрекен ҫирӗм автономлӑ республикӑсен ӗҫҫыннисем Верховнӑй Советсене суйламали хаваслӑ куна социалисӑмла ӑмӑртӑва ҫӗнӗрен хӑватлӑн ҫӗклентерсе йанипе, производствара ҫӗнӗрен пысӑк ҫӗнтерӳсем тунипе тата стахановла рекордсем тунипе кӗтсе илеҫҫӗ.

Мускаври Красногвардейски районӗнчи государствӑ промышленнӑҫ предприйатийӗсенчи рабочисем РСФСР Верховнӑй Советне суйлас кун тӗлне—ийунӗн 26-мӗш тӗлне малтанхи ҫурҫул програмине тултарма пулса хӑйсем ҫине илнӗ обйазателствӑна срукчӗнех пурнӑҫа кӗртнӗ. Вӗсем малтанхи ҫурҫул програмине ийунӗн 21-мӗш тӗлне тултарнӑ. 33 мӗлйун та 470 пин тӗнкӗлӗх продукци туса кӑларса—ҫурҫул планне 103,8 процент тултарнӑ.


Куйбышевск деповӗнчи (Инҫет-Хӗвелтухӑҫ крайӗ) паллӑ тимӗрҫ бусыгинӗҫ Фӗдӑр Фомук ийунӗн 22-мӗшӗнче ҫменӑри нормӑна 5.406 процент тултарнӑ, ҫапла вара вӑл хӑйӗн кун умӗн тунӑ ҫитӗнӳсенчен 950 процент иртерсе тултарнӑ.

Узбекистанра малтанхи кунсенчех колхозниксемпе колхозницӑсен суйлав умӗн пуҫарса йанӑ социалисӑмлӑ ӑмӑртуне ҫӗрмамӑк акса тӑвас ӗҫри стахановецсем—Узбек СС Республикӗн Верховнӑй Советне депутата суйлама палӑртнӑ кандидатсем йертсе пынӑ.

Депутата суйлама палӑртнӑ кандидат Саадат-биби Дадабайева йулташ звени (Андижан районӗнчи Сталин йачӗлле тӑракан колхоз) ҫӗрмамӑк калчисене йӑрансем хушшинче пиллӗкӗмӗш хут кӑпкалатса тухма тытӑннӑ. Кунта ҫӗрмамӑк лайӑх ӳсет.

Ӑмӑртса ӗҫленӗ ҫӗрте Иркутск облаҫӗнчи социалисӑмлӑ уйхирсенчи стахановецсем пысӑк ҫитӗнӳсем тунӑ. ССР Сойузӗн Верховнӑй Совет депутачӗ Мухинӑ йулташ йертсе пыракан трактӑр бригадинче кашни трактӑр 412-шер гектар ӗҫленӗ. Трактористкӑ-комсомолкӑсем—Антонӑвӑпа Саверских йулташсем хӑйсен машинисемпе 431-шер гектар ӗҫленӗ. (ТАСС).

РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене депутата суйламали хисеплĕ правапа усă курманни пĕр суйлавçă та ан йултăр!



Шупашкар хулинчи Крупская йачĕпе тăракан пахчара ийунĕн 20-мĕшĕнче профсойуз членĕсен пысăк митингĕ пулса иртрĕ. Хулари ĕççыннисем митингра РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене депутата суйлама палăртнă кандидатсемпе тĕл пулчĕç.
ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама палăртнă кандидат Т. А. Ахазăв йулташ сăмах калать.
Фото—Цыганован.

Суйлавçăсене пĕлсе тăма

Сасăласси мĕнле пулать

РСФСР Верховнăй Советне тата Чăваш АССР Верховнăй Советне суйласси пĕр кунта — 1938 çулхи ийунĕн 26-мĕшĕнче пулса иртет. Суйлавсем ирхине 6 сехетрен пуçласа çĕрле 12 сехетчен, урăхла каласан, 18 сехет хушши пулса иртмеле. Суйлав умĕнхи йулашки 20 кун хушшинче участкăсенчи суйлав комиççисем кулленех суйлав кунĕпе суйлав ăçта пуласси çинчен суйлавçăсене анлăн пĕлтерсе тăраççĕ.

Суйлав кунĕ тĕлне 18 çул тултарнă пур граждăнсен те, ăсран тухнисемсĕр тата судпа айăпласа суйлав прависĕр хăварнă çынсемсĕр пуçне, РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавне хутшăнма та, Верховнăй Советсене суйланма та права пур.

Суйлавсем пуçланиччен кашни суйлавçăн участкăри суйлав комиççине кайса, хăйне суйлавçăсен спискине кĕртнине тата хушаматне, йатне, ашшĕ йатне тата çул шутне тĕрĕс çырнине тĕрĕслесе тухмала. Суйлавçăсен спискинчи тĕрĕсмарлăхсем çинчен вырăнти совета жалăба памала, вăл совет виçĕ кунлăх срукра çав жалăбăна пăхса тухма, тивĕçлĕ тÿрлетÿсем кĕртме тата ун çинчен жалăба паракана пĕлтерме тивĕç.

Суйлавçăн çакна çирĕп асра тытас пулать: суйлавсем вăл хăш вырăнта ĕçленĕ çĕрте мар, хăш вырăнта пурăннă çĕрте пулса иртеççĕ. Кашни суйлавçă хăй сасăлать, çавна тума вăл сасăламали çуртне пырать. Суйлав çуртне пынă суйлавçă участкăри суйлав комиççи çекретарне йе членне—паспăрт, йе колхоз кĕнеки, йе профсойуз билечĕ, йе суйлавçă камне пĕлтерекен урăх удостоверени кăтартать. Вара суйлавçăсен списки тăрăх тĕрĕсленĕ тата суйлавçăсен спискинче паллă туна хыççăн, йышăннă образецлă суйлав бÿллетенне тата конверт илет.

Пирĕн Чăваш республикинчи суйлавçăсем иккĕ бÿллетенпе иккĕ конверт илеççĕ: пĕр бÿллетенпе конверт (шупка-кăвак тĕслĕ).—РСФСР Верховнăй Советне суйлама, тепĕр бÿллетенпе конверт (шурă тĕслĕ)—Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлама.

Суйлав çуртне „Сасăлама права паракан удостоверенипе" пынă çынсене, вăл хисепрех ытти союзлă тата автономлă республикĕсенчен килнĕ çынсене те, участкăри суйлав комиççийĕ уйрăм списока çырса пырать, ăна суйлавçăсен списки çумне хурать. „Сасăлама права паракан удостоверенине" суйлавçăран илсе списк çумне хураççĕ.

Суйлав бÿллетенĕсемпе конвертсем илнĕ суйлавçă бÿллетенсене тултарма уйрăм пÿлĕме кайать. Çав пÿлĕмре сасăлана вăхăтра, сасăлакансемсĕр пуçне урăх никамăн та, çав шутрах участкăри суйлав комиççи членĕсен те, пулма йурамасть.

Хăшпĕр суйлавçăсем хутла пĕлмен пирки е пÿ-сиринмеле те пулин çитменлĕх пирки хăйсем тĕллĕн суйлав бÿллетенĕсене тултарма пултараймаççĕ. Çавăн пек суйлавçăсем суйлав бÿллетенĕсене тултармали пÿлĕме кирек хăш урăх суйлавçăна суйлав бÿллетенĕсене тултарма пулăшма чĕнсе кĕртме пултараççĕ.

Бÿллетене тултарнă чухне суйлавçăн саккунпа çирĕплетнĕ сасăлас йĕркесене çирĕп пăхăнса тăмала.

Çапла, суйлавçă панă бÿллетен йышăннă образецлă тата йышăннă тĕслĕ пулмала. Йышăнман образецлă тата йышăнман тĕслĕ бÿллетенсене сасăсене шутланă чухне чăн мар тесе йышăнаççĕ. Бÿллетенсене конверт ăшне чиксе çыпăçтармала.

Бÿллетенпе конверт йышăннă образецлă пулмалине—сасăласси чăннипе вăрттăн пултăр тесе тăваççĕ. Кашни суйлавçă бÿллетене хăй мĕнлине тупнă çавăн пек конверт ăшне хурса йарсан, вара çав конверт тăрăх вăл конверт камăн пулнине тата вăл конверта паракан суйлавçă камшăн сасăланине çăмăллăнах палăртма пулать.

Кашни бÿллетенпе суйлавçă пĕр кандидатшăн кăна сасăлама пултарать.

Округсенчи суйлав комиççисенче хăй вăхăтĕнче регистрациленĕ тата суйлав бÿллетенĕсем çине кĕртнĕ кандидатсемшĕн сасăлаççĕ. Суйлавçă бÿллетен çине çĕнĕрен урăх нимĕнле кандидатсене те çырса хума пултараймасть. Вăл çапла тăвать пулсан, вара унăн бÿллетенĕ чăн мар шутланать. Бÿллетен çинче нимĕнле лапăртанисем те, тÿрлетнисем те тата çырса хунисем те пуламла мар.

Бÿллетен çине пĕр кандидатăн хушаматне çеç пичетленĕ пулсан тата суйлавçă çав кандидатшăн сасăлать пулсан, унăн бÿллетенре нимĕн те хуратмала мар.

Бÿллетене конверт ăшне хурса конвертне çыпăçтарсан, суйлавçă участкăри суйлав комиççийĕ вырнаçнă пÿлĕме пырать. Ку пÿлĕмре иккĕ суйлав йешчĕкĕ ларать. Пĕрин çине „РСФСР Верховнăй Советне суйламали суйлав йешчĕкĕ" тесе çырнă, теприн çине „Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали суйлав йешчĕкĕ" тесе çырнă.

Суйлавçă шупка-кăвак конверта „РСФСР Верховнăй Советне суйламали суйлав йешчĕкĕ" тесе çырнă йешчĕке йарать. Шурă тĕслĕ конверта „Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали суйлав йешчĕкĕ" тесе çырнă йешчĕке йарать.

Суйлавçă кандидатшăн сасăларĕ. Вăл хăйĕн сасне пачĕ, çапла тунипе вăл ăна шанние палăртрĕ. Анчах хăй суйлакан йана кандидат тĕлĕшпе суйлавçă обязаннăçĕсене çакăнпах пĕтмест-ха. Мускаври Сталинский суйлав округĕнчи суйлавçăсен суйлав умĕнхи пухăвĕнче 1937 çулхи декабрĕн 11-мĕшĕнче Сталин йулташ суйлавçăсене панă канаша суйлавçăсен йăланах асра тытмала:

„Суйлавçăсен ĕçĕсем суйлавсемпе пĕтмеççĕ. Вĕсем хаş суйласа лартнă Верховнăй Советăн пĕтĕм тапхăрне пыраççĕ. Суйлавçăсене, хăйсен депутачĕсене тĕрĕс çул çинчен пăрăнсан вĕсене срукченех çĕнĕ илме права паракан саккун çинчен епĕ каларăм ĕнтĕ. Апла пулсан, суйлавçăсен обязаннăçĕпе прави çакăнта пулать: вĕсем хăйсен депутачĕсене пĕрмайах контроль туса пычăр, вĕсене тем пулсан та политикăлă обывательсен картине кайса лармала марри çинчен ÿкĕтлеччĕр, вĕсем — суйлавçăсем хăйсен депутачĕсене аслă Ленин пек пулма вĕрентсе тăччăр".

Г. И. ИВАНОВ йулташ суйлавçăсен пухăвĕнче

КАСЛАВККА, (хамăр корр). Ийунĕн 22-мĕшĕнче Йелчĕк суйлав округĕнче çамрăк суйлавçăсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура çамрăк суйлавçăсем 1000 çынна яхăн пулчĕç. Кунта ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама Йелчĕк суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат—ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн çекретарĕ Г. И. Иванов йулташ пулчĕ, суйлавçăсем ăна питĕ кăмăллăн кĕтсе илчĕç. Г. И. Иванов йулташ сăмах туса каларĕ.

Г. И. Иванов йулташ хăйĕн сăмахĕнче ССР Союзĕнчи халăхсем ПСК(б)П, аслă Сталин йулташ йертсе пынипе социализм строительствинче историлĕ çĕнтерÿсене туни çинчен, пирĕн тăван çĕршыв тĕнчери хăватлă держава пулса тăни çинчен, хамăрăн тĕлĕнмелле пысăк çĕнтерÿсене Сталинла Конституци çине çырса çирĕплетсе хуни çинчен калать.

Чăваш республике 20 çул хушшинче туна çитĕнÿсем çинчен чарăнса тăрса, Г. И. Иванов йулташ çапла каларĕ: „Халĕ пирĕн промышленнăç, колхозлă йал, форма енĕпе нациллĕ, содержани тĕлĕшĕнчен социалисăмлă культура çулран çул çĕкленсе пыраççĕ. Социалисăм чăваш халăхĕн йăлине кĕчĕ. Халĕ ĕнтĕ чăваш халăхĕ те ССР Союзĕнчи ытти халăхсемпе пĕрле праваллă, телейлĕ те савăнăçлă пурнăçпа, тĕнчери чи демократиллĕ Конституци йăлипе пурăнать. Епер çакна ПСК(б)Парти, Сталин йулташ йертсе пынипе, халăх тăшманĕсене—троцкисла-бухаринла, буржуалла националисла бандитсене хирĕç кĕрешсе туна. (Тăвăллăн алă супаççĕ.—Сталин йулташа „ура"!).

Малала Иванов йулташ халăх суйлана депутатсен мĕнле пулмаллине, мĕнле ĕçлемели çинчен чарăнса тăчĕ. „Есĕр мана иккĕ хутчен ĕнтĕ кандидата тăратрăр. Малтан ССР Союзĕн Верховнăй Совет депутатне суйларăр. Халĕ Чăваш АССР Верховнăй Совет депутатне суйлама палартрăр. Çакă ĕнтĕ манăн халăх умĕнчи ответлăха темиçе хут ÿстерет. Çавăнпа та епĕ, хамăн пĕтĕм вăйа, хам мĕн пĕлнине, йулашки тумлам йун йулмиччен, халăх ĕçĕшĕн, ĕççыннисен телейлĕ те савăнăçлă пурнăçĕшĕн кĕрешме паратăп тесе, сире, суйлавçăсене, сăмах паратăп" (Алă супаççĕ).

Виктăрăв йулташ сăмахĕ

Йулташсем, епĕр Совет Союзĕнчи телейлĕ те савăнăçлă çамрăксем, ийунĕн 26-мĕшĕнче хамăрăн сасăсене пире телейлĕ пурнăç туса панă халăхсен аслă çулпуçĕшĕн Иосиф Виссарионăвич Сталин йулташшăн, коммуниссемпе партире тăманнисен сталинла блок кандидачĕсемшĕн паратпăр. (Алă супаççĕ).

Епĕр, совет çамрăкĕсем, ĕлĕкхи йушала, асапла, хĕн-хурлă пурнăçа курман, тÿсмен. Çав ылханлă пурнăç çинчен епĕр кĕнекесем тăрăх, ваттисем каласа панă тăрăх çеç пĕлетпĕр. Çапла пулин те ĕлĕкхи патша саманинчи çамрăксен пурнăçне хамăрăн пайанхи, сталинла саманари пурнăçпа танлаштарсан, епĕр мĕн пек савăнăçлă, мĕн пек телейлĕ пулни, кашни çамрăкшăн паллă. Пирĕн совет çамрăкĕсене çак телейлĕ пурнăçа коммунисла парти, пролетарилĕ революцин гениллĕ руководителĕсем Ленинпа Сталин йулташсем туса пачĕç. (Алă çупаççĕ).

Пирĕн Йелчĕк округĕ тăрăх ЧАССР Верховнăй Совет депутатне суйлама регистрациленĕ кандидат çирĕп большевик, Ленин—Сталин партийĕ вĕрентсе çитĕнтернĕ çын, партин Чăваш Обкомĕн пĕрремĕш çекретаре Г. И. Иванов йулташ. Епĕ округри çамрăк суйлавçăсен йачĕпе хамăр округри суйлавçăсем ийунĕн 26-мĕшĕнче хăйсен сассисене коммуниссемпе партире тăманнисен сталинла блокĕ тăратнă кандидатшăн—Г. И. Иванов йулташшăн параççĕ, суйлавçă социалисăм строительствинче çĕнĕ çитĕнÿсем тунипе тухатпăр, тесе ĕнентерсе калатăп. Йелчĕк суйлав округĕнчи суйлавçăсем хăйсен сассисене Г. И. Иванов йулташшăн савăнса параççĕ.

Сывă пултăр коммуниссемпе партире тăманнисен никам çĕнтерейми сталинла блокĕ!

Сывă пултăр тĕнчери пролетариатăн гениллĕ çулпуçĕ Сталин йулташ! (Тăвăллăн алă çупаççĕ).

Пухура тата Жилăв, Короłов, Горчихин йулташсем сăмах каларĕç. Вĕсем пурте суйлавçăсене ийунĕн 26 мĕшĕнче хăйсен сассисене Сталин йулташшăн, коммуниссемпе партире тăманнисен сталинла блокĕ тăратнă кандидатсемшĕн пама пулаççĕ.

Пуху хыççăн çамрăксен ташă-йурă, вăй-кулă пулчĕ. Каçхине вĕсене саслă кино-картинă кăтартрĕç.

Халăхăн чи лайăх ывăлĕсемпе хĕрĕсене суйлатпăр

ВĂРНАР, (хамăр корр). Ийунĕн 20-мĕшĕ. Вăрманкасси йалĕ пайан уйаври пек илемлĕ тум тăхăннă. Аçта кирлĕ унта хĕрлĕ йалавсем вĕлкĕшсе тăраççĕ. Кашни кил умĕнче пекех Хапăс суйлав округĕнчен ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама палартнă кандидатăн—Г. М. Гуçĕв йулташăн биографийĕпе портречĕ.

Тĕрлĕрен лозунгсемпе, çулпуçĕсен портречĕсемпе, тĕрлĕрен картинăсемпе тата ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама регистрациленĕ кандидатăн—Гуçĕвăн, Вăрнар суйлав округĕнчен РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама палăртнă кандидат И. В. Дубăв йулташăн портречĕсемпе илемлĕн ерешленĕ, клубра патефон хамăрăн çулпуçсем çинчен, ытарайми çĕршыв çинчен тата ăна паттăрăн сыхлакан мухтавлă Хĕрлĕ Çарпа унăн паттăрĕсем çинчен хунă йурăсене шăрантарать. Халăх киленсе итлесе ларать.

Пуханнă халăх кандидатсен биографийĕсене тепĕр хут вуласа пама ыйтрĕ.

— Хамăрăн кандидатсене лайăх пĕлсе тăрар,—теççĕ.

Савăнăç концерчĕ ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама палăртнă кандидат Гуçĕв йулташ килсе çитсен вĕçленчĕ. Урамри çерем лаптăкĕнче, лăпкăн çеç вĕрекен çилпе хумханса ларакан йамрасен сулхăнĕнче суйлав умĕнхи пуху пуçланчĕ. Суйлавçăсем пĕрин хыççăн тепри тухса, хĕрÿлĕ, çĕршыва, пире çĕнĕ çĕнтерÿ патĕнчен тепĕр çĕнĕ çĕнтерÿ патне йертсе пыракан аслă Сталина йуратнипе тулнă сăмахсем калама пуçларĕç.

— Ĕлĕкхи пурнăç пĕртте халхи пек савăнăçлă пулман,—тесе пуçларĕ хăйĕн сăмахне Г. Михайлăв суйлавçă,—совет граждăнĕсем, хамăршăн чĕререн тăрăшса ĕçлеме пултаракан çынсене, халăхăн чи лайăх ывăлĕсемпе хĕрĕсене суйлатпăр. Акă ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама палăртнă Г. М. Гуçĕв йулташа илер. Вăл пирĕн йуратнă çын. Вăл пилĕк çул хушши пирĕн Вăрнар районĕнчи МТС директăрĕ пулса ĕçлесе, кулленех пулăшса пычĕ. Вăл—пирĕн коммунисла партин шанчăклă ывăлĕ. Вăл тăрăшса ĕçленипе, тĕрĕс йертсе пынипе Вăрнар МТС Чăваш республикĕнче малти вырăна тухма тивĕçлĕ пулчĕ.

Г. М. Гуçĕв йулташ йалхуçалăх машинĕсемпе ĕçлекен ăстаçăсене вĕрентес тĕлĕшпе нумай тăрăшнине хамăр йалти ĕçсем те лайăх çирĕплетсе параççĕ. Халĕ пирĕн йалта 12 трактăрис, 5 шофер, 2 комбайнер. Вĕсем пурте МТС çумĕнчи курсра вĕренсе çавăн пек пысăк ăстаçăсем пулчĕç.

Г. М. Гуçĕв йулташа пултарулăн ĕçлесе пынăшăн кăçал Вăрнар райĕçтăвкомĕн председателĕ туса хучĕç. Суйлавçă йулташсем! Гуçĕв йулташ халăх хушнă ĕçе тума пултарать, епĕр пурте хамăрăн сасăсене уншăн парар! Сывă пултăр коммуниссемпе партире тăманнисен сталинла блокĕ! Сывă пултăр пире ăста йертсе пыракан çулпуç Сталин йулташ!

Михайлăв йулташ хыççăн, кăçал пĕрремĕш хут суйлава хутшăнакан Иван Нарышкин, Çтепанăвă, Павлăв суйлавçăсем те çавăн пекех хĕрÿлĕ сăмахсем туса каларĕç. Йулашкинчен, ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама Хапăс суйлав округĕ тăрăх регистрациленĕ кандидат Г. М. Гуçĕв йулташ тухса каларĕ.

Г. М. Гуçĕв йулташ сăмахĕнчен

— Йулташсем! Сире, Вăрманкасси суйлав участкинчи суйлавçăсене, мана халăх ĕçне тума шанса, манăн кандидатурăна ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама палăртнăшăн тав тăватăп, сирĕн шанăçа ĕçпе пурнăçа кĕртме сăмах паратăп.

Коммунисла парти тата унăн çулпуçĕ тĕрĕс йертсе пынине пире пурсăмăра та ĕçлеме савăнăçлă. Ку таранччен етемлĕх курман телейлĕ, тĕлĕнмеле тапхăрта пурăнатпăр епĕр. Пирĕн ытарайми çĕршыв куллен кун чечекленсе ÿссе пырать. Кашни кун çĕнĕрен çĕнĕ çĕнтерÿсем илсе килет.

Йулташсем! Вăрманкас суйлав участкинчи суйлавçăсем! Есĕр çуракине аван иртертĕр, ун çинчен уй-хирте хумханса ларакан çăра та патмар калчасем лайăх калаççĕ. Лăпланса лармa йурамасть, кăçалхи вăйлă тырпула пухса кĕме тивĕçлипе хатĕрленмеле.

Ку таранчен тăрăшса ĕçленĕ пекех, малала та пĕтĕм вăйа хурса ĕçлесси çинчен сире чĕререн ĕнентерсе каларăм, есĕр те хăвăрăн колхоза тата вăйлатассишĕн тăрăшса ĕçлĕр. Пĕр-пĕрне куллен пулăшса пырсан пирĕн ĕçсем нихçанхинчен те ăнăçлăрах пулса пырĕç. Сывă пултăр пирĕн çулпуç аслă Сталин! (Хыттăн алă çупаççĕ).

Й. Çтепанăвă суйлавçă сăмахĕ

— Епĕ хамăрăн кандидатпа, Гуçĕв йулташпа тĕл пулса калаçнă йатпа пĕр-ик сăмах калас тетĕп. Кунта тухса калакансем пирĕн суйлавсем савăнăçлăн, йĕркелĕн иртни çинчен каларĕç. Епĕр халĕ суйлав çулне çитнисем пурте—арçынсем те хĕрарăмсем те—суйланма тата суйлама пултаратпăр. Ĕлĕк апла пулман вĕт, йулташсем! Ĕлĕк хĕрарăма çын вырăнне хуман.

Халĕ ĕнтĕ хĕрарăмсене те çул уçă, вĕсем арçынпа танлашрĕç. Епĕр халĕ пурте пĕр шухăшпа ĕçлесе пурăнатпăр. Хамăрăн пурнăçа йусассишĕн, çавăнпа пĕрлех çĕршывăн тĕрекне çирĕплетессишĕн тăрăшатпăр.

Пирĕн кандидат Гуçĕв йулташ ĕçре палăрнă çын. Епĕ хамăн сассăма уншăн паратăп. Пурте уншăн сасăлĕç. Мĕншĕн тесен, вăл епĕр палăртнă кандидат.

Иван Нарышкин суйлавçă сăмахĕ

— Епĕ кăçал пĕрремĕш хут суйлава хутшăнса, хамăн сассăма ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама палăртнă кандидатшăн—Гуçĕв йулташшăн тата РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама Вăрнар округĕнче регистрациленĕ кандидатшăн Дубăв йулташшăн паратăп. Вĕсем иккĕшĕ те халăх хушшинчен тухнă, коммунисла парти вĕрентсе пынипе çитĕннĕ çынсем. Епĕр вĕсене пурте лайăх пĕлсе тăратпăр. Вĕсем халăх ĕçне халиччен хи пекех тăрăшса пурнăçласа пырассине шанатăп.

Суйлав участкисенче

ИШЛЕЙ. Район центрĕнчи суйлав участки суйлавçăсене йышăнма хатĕрленсе çитнĕ. Суйлав документчĕсене (бÿллетенсене, конвертсене) кирлĕ чухлĕ илсе хатĕрленĕ, халĕ вĕсене лайăх сыхласа усраççĕ. Участкăри комиççи вырнаçнă çуртра татăлмасăрах дежурнăйсем тăраççĕ.

Суйлав участки центрĕ Ишлейри вăтам шкул çуртĕнче. Кунта халĕ вăрттăн сасăламали 9 пÿлĕм туса хатĕрленĕ. Участкăри суйлав комиççийĕ тата Ишлейри культурăлă вăй суйлавçăсене кĕтсе илме лайăх хатĕрленеççĕ. Участкăна пыракан суйлавçăсене валли канма йатарласа пĕр пÿлĕм уйăрнă. Кунта учительсемпе 10-мĕш класра вĕренекенсен хорĕ тĕрлĕ йурăсем йурласа парать. Халĕ хор тĕрлĕрен çĕнĕ йурăсене вĕренет. Спорт площадкинче волейбол тата ытти вăйăсем пулаççĕ. Пĕр пÿлĕмре буфет ĕçлет.

— Суйлав кунĕ çывхарса килет, çакна май суйлавçăсем хушшинче агитаци ĕçне вăйлатрăмăр. Колхозниксем ĕçленĕ çĕре кайса суйлав Положенисем çинчен тата Верховнăй Советсене депутата суйлама тăратнă кандидатсем çинчен тĕплĕн ăнлантарса паратпăр. Мускаринкасси, Алмикасси тата Федĕркасси йалĕсенчи суйлавçăсем суйлав саккунне лайăх пĕлеççĕ,—тет агитатăр Васильĕв йулташ.

Т. Майорăв.

* * *

КÿКЕÇ. Кÿкеçри 1-мĕш номĕрлĕ суйлав участкинче РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă кандидатшăн—Калинкинă йулташшăн, ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă кандидатшăн Дубăв йулташшăн агитацилес ĕç хĕрÿлĕн пырать. Участкăна 10 бригадăна уйăрса, вĕсен çумне пĕрер агитатăр çирĕплетнĕ, кунсăр пуçне доверĕннăйсем 2 çын ĕçлеççĕ. Вĕсем кашни кунах кану вăхăтĕнче уйра, çавăн пекех çулйĕр ĕçĕнче ĕçлекенсен хушшинче те агитациленĕççĕ.

Агитатăр Васильĕв йулташ хăйĕн бригадинче агитаци ĕçне уйрăмах лайăх туса пыни палăрать. Вăл суйлавçăсемпе 6 канашлу туса ирттернĕ. Хаĺь Васильĕв йулташ депутата суйлама тăратнă кандидатсен пурнăçĕпе суйлавçăсене паллаштарать.

Ил. Сидоркин.

Хавасла çĕкленÿ кунĕсем

Халĺхи вăхăтра Таджикистанри, Узбекистанри, Туркменири, Киргизири, Казахстанри тата Азербайджанри ĕççыннисем калама çук хавасла çĕкленÿ кунĕсене пурăнса ирттереççĕ. Историлĕ кун умĕн—Верховнăй Советсене суйлас кун умĕн—суйлавçăсен йулашки хут пулнă суйлав умĕнхи пухăвĕсем пысăк çĕкленÿпе те хаваслăхпа иртнĕ.

Узбекистан столицинчи — Ташкент хулинчи суйлав участкисенче суйлав кунĕ тĕлне пурте хатĕр. Сасăламали пÿлĕмсене илемлĕн йĕркеленĕ. Канмали пÿлĕмсене сĕтел-пукансем лартса тухнă, ачасен пÿлĕмĕсене лайăх йĕркеленĕ, столовăйсем, буфетсем организациленĕ.

Казахстан столицинче — Алма-Атара суйлав кампани вăхăтĕнче активис-агитатăрсем çĕнĕрен çĕршерĕн палăрнă. Вĕсем ĕççыннисене социалисăм çĕнтерĕвĕсем çинчен, çав çĕнтерÿсене тума чĕрĕ вăй парса хавхалантараканни çинчен—аслă Сталин çинчен каласа кăтартаççĕ.

Караганда облăçĕнче суйлав участкисенче вунпĕр пине йахăн агитатăр ĕçленĕ. Агитатăрсем агитацилĕ ĕçе уйрăмах Караганда суйлав округĕнче—В. М. Молăтăв йулташ депутата суйланма килĕшÿ панă çĕрте—пысăк хаваслăхпа туса пынă.

Алма-Ата хулинчи Кагановичски суйлав округĕнче—Л. М. Кагановичйулташ депутата суйланма килĕшÿ панă çĕрте хăйсен мухтавлă кандидачĕн биографине пур суйлавçăсем те пĕлеççĕ.

Баку хулинчи 56-мĕш номĕрлĕ Ленински суйлав округĕнче—Азербайджан СС Республикĕн Верховнăй Советне депутата суйланма халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин йулташ килĕшÿ панă çĕрте—историлĕ куна—ийунĕн 24-мĕшне пĕтĕмпе хатĕр пулнипе кĕтсе илеççĕ. Участкăсенчи суйлав комиççисем суйлавçăсене кĕтсе илме хатĕр. Ленин йачĕпе тăракан Культура Двореçĕн башнинче, — унта округри суйлав комиççи ĕçлет, — радиофикациленĕ, çутатакан сехет лартаççĕ. Ийунĕн 24-мĕшĕнче ирхине шăп 6 сехетре çав башнĕ çинчен „Интернационалăн" чаплă сассисемпе сехет çапни йантраса кайать те, мĕн пур суйлав участкисен алăкĕсем суйлавçăсене йышăнма уçăлса кайаççĕ.

Нумай çĕрте пулса иртнĕ суйлав умĕнхи митингсемпе пухусенче тухса каласа, ĕççыннисем пурте пĕр шухăшлăн пулса Верховнăй Советсене суйлас кун — ийунĕн 24-мĕшĕнче — коммуниссемпе партире тăманнисен Сталинла блок кандидачĕсемшĕн сасăласа, хăйсен коммуниссен парти тавра таччă пĕтĕçсе тăнине, Ленин—Сталин ĕçне чĕререн йуратса тăнине тата тепĕр хут кăтартса пама хатĕр тăни çинчен каласа параççĕ.

(ТАСС).

Суйлав участкисенче, предприйатисенче, колхозсенче сталинла блок кандидачĕсемшĕн агитацине тата ытларах вăйлатар!

РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене депутата суйлама палăртнă кандидатсем хăйсен суйлавçисем патĕнче

ЙĔПРЕÇ. Июнĕн 19 мĕшĕнче РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă кандидат Александр Василйĕвич Сомăв тата Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă кандидат Çергей Ксенофонтăвич Коротков йулташсем Туçа суйлав участкинчи суйлавçăсен пысăк митингĕнче пулчĕç. Митинга „Çиçĕм", „Коммунар", „МОПР" колхозсенчен 400 суйлавçă пухăнчĕç.

А. В. Сомăв йулташ сăмахĕнчен

Йулташсем! Пирĕн анлă та аслă тăван çĕршыв коммунисла парти, çулпуç Аслă Сталин йертсе пынипе пысăкран та пысăк çитĕнÿсем туса пырать. Совет влаçĕ пулнăранпа 20 çул хушшинче, ĕлĕкхи киревсĕр, ĕçхалăхĕшĕн тĕрмĕ пулнă патша Российĕнчен паллама çук чаплă та вăйлă индустрилĕ, никама пăхăнман социалисăмлă державă пулса тăчĕ.

Çак çитĕнÿсем вĕсем пирĕн чи йуратнă аслă çулпуç, учитĕл Сталин йулташ йертсе пынипе пулчĕç. Çавăнпа Иосиф Виссарионăвич Сталин халăхсен пĕрремĕш кандидачĕ пулса тăрать. (Алă çупаççĕ)

Мана Ленин—Сталин партийĕ халăх шанăçне тивĕçлĕ çын турĕ. Епĕ хамăн пĕтĕм вăйа хурса Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн тăрăшса ĕçлесе пыратăп. Есĕр ман çине хунă шанăçа тÿрĕ кăмăлпа ĕçлесе пурнăçлăп. (Алă çупаççĕ).

Ç. К. Коротков йулташ сăмахĕнчен

Йулташсем! Июнĕн 26-мĕшĕнче Совет çĕршывĕнчи пĕтĕм ĕçхалăхĕ хăй пирĕн Ленин—Сталин партине чĕререн йуратнине тепĕр хут кăтартса парать.

Мана Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата палăртса ман çине пысăк шанăç хунăшăн сире пысăк тав тăватăп. Есĕр хунă пысăк шанăçа тÿррĕн пурнăçласа пырăп, тесе сăмах паратăп. (Алă çупаççĕ).

* * *

ШĂХАСАН. Йамаш суйлав округĕнчен ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă кандидат Андрей Иванăвич Иванов йулташ хăйĕн суйлавçисемпе тĕл пулчĕ. Çак пухăва Иамаш, Йенĕш тата ытти йалсенчи суйлавçăсем те пухăнчĕç. Пухура Андрей Иванăвич Иванов йулташ тухса каларĕ.

Иванов йулташ сăмахĕнчен

— Совет влаçĕ мана сарлака та аслă çул уçса пачĕ. Колхоз организациленнĕ вăхăтра хамăн пĕтĕм пултарулăха колхоз производствине тĕреклетес çĕре хутăм. Çичĕ çул хушши колхоз бригадирĕнче ĕçленĕ хыççăн мана шанса Уйкас Кипек йалсовет председателне суйларĕç. Епĕ хама шанса панă ĕçе хастарлăн пурнăçласа пытăм.

Халĕ Йамаш суйлав округĕнчи ĕççыннисем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратса, ман çине татах та пысăк шанăç хучĕç, пысăк чыс турĕç. Епĕ пĕтĕм халăхшăн мĕн пур вăйа хурса ĕçлеме пулатăп, халăх шанăçне тивĕçлипе ĕçре кăтартăп.

* * *

ЕЛĔК. ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă кандидат Т. П. Куликов Вутлан йалĕнче хăйĕн суйлавçисем патĕнче пулчĕ.

Куликов йулташ хăйĕн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен каласа пачĕ.

Куликов йулташ сăмахĕнчен

Йулташсем—суйлавçăсем! Есĕр мана Вутлан суйлав округĕ тăрăх Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратса, ман çине пысăк шанăç хутăр. Куншăн сире чĕререн тав тăватăп. Епĕ ку шанăçа пĕтĕм вăйа хурса ĕçленипе ответлеме пулатăп.

Епĕ 5 çул хушши Хитекушкĕн колхоз председателĕ пулса ĕçлерĕм. Колхоза тĕреклетес ĕçре лайăх ĕçленĕшĕн, вăйлă тырпулшăн хĕрÿллĕн кĕрешнĕшĕн мана ССР Союзĕн Тĕпĕçтăвкомĕ Орден парса наградăларĕ.

Есĕр ман çине хунă пысăк шанăçа тÿррĕн ĕçлесе пынипе ответлĕп.

* * *

ИШЛЕЙ. Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Ишек суйлав округĕнчен тăратнă кандидат Г. А. Херсонăв йулташ Чаканарти суйлавçăсем патĕнче пулчĕ. Чаканарти чăпта çапакан ертелĕн хапрăкне çывăхри йалсенчи суйлавçăсем те нумайăн пухăнчĕç. Пухура Херсонăв йулташ тухса сăмах каларĕ.

1938 çулхи июнĕн 12-мĕшĕнче Грузи тата Армйан ССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсем пулса иртнĕ. Вăл суйлавсенче коммунисcемпе партире тăманнисен сталинла блокĕ тата тепĕр чаплă çĕнтерÿ турĕ.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Паллă стахановĕц Г. А. Ксоврели сасăлать (Тбилиси хули, Ленински суйлав округĕ, 4-мĕш участкă).

Фото—В. Черкасăвăн (Союзфото).

СЕРГЕЙ КСЕНОФОНТĂВИЧ КОРОТКОВ—ЧАССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ—Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Клĕмкасси (Йĕпреç р-нĕ) суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат.

Хапăс суйлав округĕ суйлава хатĕр

Вăрнар районĕнче ЧАССР Верховнăй Советне суйламали 5 округ. Хапăс суйлав округĕнче организацилĕ ĕçсене лайăх туса пыраççĕ. Суйлав участкисенчи суйлавçăсен спискисене пур çĕрте те тĕрĕс, нимĕн варалмасăр çырса çакнă. Суйлавçăсене спискăна кĕртмесĕр хăварни пулман. Çамрăксемпе пĕрлех 50—60 çулхи суйлавçăсем агитатăр пулса ĕçлеççĕ.

Хапăс суйлав округĕнче 11 суйлав участки шутланать. Вĕсенче пуринче те суйлав пулмали çуртсене июнĕн 22-мĕшĕнчен çуса тасатса, лозунгсемпе тата портретсемпе илемлетсе хатĕрленĕ. Кабинăсене тунă, суйлав йешчекĕсене вырнаçтарса лартнă. Суйлав çурчĕсем суйлавçăсене йышăнма хатĕр тăраççĕ.

Хапăс суйлав округĕнчен ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама палăртнă кандидат Григорий Михайлăвич Гуçĕв йулташ 9 участкăсенчи суйлавçăсемпе тĕлпулса каласнă. Йулашки тĕлпулу июнĕн 24-мĕшĕнче пулса иртет. Ку тĕлпулура йулашки икĕ участкăри суйлавçăсем пухăнаççĕ.

Гуçĕв йулташа Хапăс суйлав округĕнчи суйлавçăсем пурте лайăх пĕлсе тăраççĕ. Вĕсем июнĕн 26-мĕшĕнче хăйсен сассисене Гуçĕвшăн тата Вăрнар суйлав округĕнчен РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама палăртнă И. В. Дубăвшăн параççĕ.

Июнĕн 26-мĕшне пысăк уйав кунĕ вырăнне хурса кĕтеççĕ. Коммунисcемпе партире тăманнисен Сталинла блокĕ иртнĕ суйлаври пекех ку суйлавра та çĕнтересси паллă. Мĕншĕн тесен, суйлама палăртнă кандидатсем пурте халăх хушшинчен тухнă, вĕсем халăх хăйсене шанса панă ĕçе тивĕçлĕ туса пырассишĕн пĕтĕм вăйне, пĕтĕм пĕлÿне, кирлĕ пулсан, пĕтĕм пурнăçне пама хатĕр тăракан çынсем пулса тăраççĕ.

Усли Ваçлейĕ.

Суйлав кунне хаваслăн кĕтеççĕ

Трак. Енĕшкассинчи суйлав участки РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавне тĕплĕн хатĕрленнĕ. Сасăлама кĕмели пÿлĕмсем 5. Вĕсене илемлĕн йĕркеленĕ. Пÿлĕмсенче мĕн кирли пурте пур: сĕтел, пукан, ручкă, чернилсем хатĕр. Сĕтелсене хĕрлĕ хăмач сарнă.

Участкăри суйлавçăсем суйлав кунĕ çинчен пурте пĕлеççĕ. Кашни кил умне суйлав йачĕпе кăларнă плакат çыпăçтарнă. Тата килĕрен çÿресе те суйлав çинчен йăнлантараççĕ.

Суйлав кунĕнче кашни йалтах пĕр кулăх ача йаçли пулать. Ачасене шута илнĕ. Шавлă оркестр тĕрлĕрен йурăсем вылйама хатĕрленет. Урамра волейбол, крокет площадкисем хатĕрленĕ. Биллиард, шахмăт-шашкăсем те пур.

Суйлавçăсене, иртнĕ суйлаври пекех, чей пулать, тĕрлĕрен çимĕçсемпе сутă тăвакан лавка, буфет пулать.

Суйлавçăсем июнĕн 26-мĕшне хăваслансах кĕтеççĕ.

Г. Закамский.

Çамрăк суйлавçăсен массовки

ТРАК, (телеф н тăрăх). Июнĕн 20-мĕшĕнче Йенших-Чуллă йалĕ çывăхĕнчи вăрманта çамрăк суйлавçăсен массовки пулса иртрĕ. Массовкăна Аслă Чуллă, Йенших, Кĕçĕн Чуллă, Вăрманкасси, Мăн Супар, Çĕнĕ Супар, Тĕрер тата Çĕнйал йалĕсенчи çамрăк суйлавçăсем пурĕ 500 çын ытла пухăнчĕç.

Массовкăра Трак райĕçтăвкомĕн председателĕ Игнатйĕв йулташ РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсем çинчен, ССР Союзĕн çитĕнĕвĕсем çинчен, Трак районĕ суйлав кунне пысăк çитĕнÿсемпе кĕтсе илни çинчен каларĕ.

Июнĕн 26 мĕшĕ тĕлне Именкасси йалĕ патĕнчи Çавал шывĕ çинче 8 йала електрицă çути пама пултаракан гидростанци пĕвине тата Сурăм шывĕ çинче 2 йала електрицă çути пама пултаракан гидростанци пĕвисене нĕвелесе çитереççĕ.

В. Ваçилйĕв.

Уйăх планне тултарнипе кĕтсе илеççĕ

Деткомиççин Шупашкарти хапрăкĕнчи çăматă йăвалакан цехри рабочисем РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавне стахановла ĕçлесе кĕтсе илеççĕ. Цехра стахановĕцсемпе ударниксен йышĕ ÿссех пырать. Ку таранччен ударник пулнă Тарасăв йулташ халĕ стахановĕцсен ретне тăчĕ. Вăл малтан нормăна 110 процент таран тултарса пынă пулсан, халĕ 180 процент тултарать.

Çăматă йăвалакан Паршурин йулташ йулашки кунсенче пысăк ÿсĕмсем турĕ. Вăл хăйĕн нормине иртнĕ уйăхсенче 100 процентран мала тултарайман, халĕ 200 процент тултарса пырать.

Çăматă йăвалакан цехри рабочисем суйлав кунне уйăх планне 200 процент тултарнипе кĕтсе илессишĕн тăрăшаççĕ.

Арк. Неçтĕрĕв.

ПАРТИ ПУРНĂÇЕ

Решенисем лайăх, ĕçĕсем начар

ВĂРНАР. Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн Вăрнар районĕнчи уполномоченнăйĕ çумĕнчи парторганизацин отчотпа суйлав пухăвĕ парторг ĕçне начар тесе хак панă. (Парторг Йĕршов йул. пулнă). Парторг пулса ĕçлеме Оçипăв йулташа суйласа хăварнă.

Ку организацире 1937 çулта тата 1938 çула кĕнĕрене пĕр çынна та парти ретне, сочувствуйушчине илни пулман. Çавăнпа та пуху çĕнĕ парторга партийе илес тĕлĕшпе комсомолĕцсем, партире тăман актив хушшинче ĕçлессине вăйлатма хушнă. Отчотпа суйлав пухăвĕ пулнăранпа 2 уйăх иртнĕ, анчах решени—решенипех йулнă. Пуху хыççăн каллех пĕр çынна та партине илмен. Кунта комсомолĕцсем чылай, анчах комсомолăн пуçламăш организацийĕ çук. Комсомолĕцсенчен хăшпĕрисем райсоюз çумĕнчи пуçламĕш организацинче, теприсем заготскот, маслопром т. ыт. организацисенче учотра тăраççĕ. Вĕсенчен чылайăшĕ ниçта та вĕренмеççĕ.

Парторганизацинче 8 кандидат. Анчах вĕсене партине куçарасси çинчен шутламан. Медведĕва (çу савăт директăрĕ), Карешина, Уткин йултащсем 1931 çултанпа, Петухов йул. 1932 çултанпа кандидатра тăраççĕ. Вĕсене парти ĕçне хутшăнтарма тăрăшман. Кандидатсем кружоксенче вĕренмеççĕ.

Парторганизацин тĕп çитменлĕхĕ вăл—йышăннă решенисене пурнăçламанни.

Майăн 3-мĕшĕнче пуху парти вĕренĕвĕпе политикăлă агитаци ĕçне йеркелесси çинчен сÿтсе-йавнă. Лайăх постановлени йышăннă. Парти вĕренĕвне хакламан коммунисcем çинчен пухусенче сÿтсе йавмала тунă. Ĕçсене пăхса тухапăр. Илйашченко йул. пуху хыççăн пĕр занятинче те пулман. Кузнецов йулташа партшкула çÿрементен ПСК(б)П райкомне те чĕнсе пăхнă, вăл çавах йĕркелĕ вĕренмест. Йĕршов йул. (парторг заместителĕ) политекономи кружокне çÿремест. Оçипăв йул. (парторг) политекономи кружокне çыраннă. „Кунта вĕренме йăвăр, епĕ парти историне вĕренетĕп" тесе кружокран та тухнă, парти историне вĕренекен кружока та çÿремет.

РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламалли Положенисене вĕренме кружоксем организациленĕ. Ку кружоксенчен пĕри те суйлав саккунне вĕренсе пĕтермен. Заготзернори кружок руководителĕ Зарении йултаи пĕр занятие те иртермен. Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕ çумĕнчи кружокра (руководителĕ Йĕршов й.) пĕр занятие иртермен.

Кунсăр пуçне тата парторганизацин „Комсомол" урамĕнчи килхуçи арăмĕсене суйлав саккунне вĕрентмеле, кандидатсемпе паллаштармала пулнă. Ку ĕçе тума парторг заместителне, Йĕршов йулташа хушнă. Вăл нимĕн те тумаст.

Коммунисcем парти порученисене парторг тĕрĕслесе пымаст. Уткин йулташа икĕ ернере пĕр номĕр стена хаçачĕ кăларса тăма хушнă. Вăл ку таранччен те пĕр номĕр кăларман.

Парторганизаци хуçалăх ĕçĕсене йертсе пымаст. Патшалăха аш-какай, сĕт-çу тăратассипе район кайа йулса пырать (аш-какай çулталăк планне 26 процент, сĕт-çу планне 27 процент тултарнă).

Парторганизаци тăшмансен сатăрлă ĕçĕсен йулашкийĕсене пĕтерес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлет. Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн уполномоченнăйне Зарении йулташа ĕçрен кăларнă. Анчах кунпа ĕç пĕтмеле мар. Заготзерно, маслопром организацисенче клас тĕлĕшĕнчен йут етемсем ĕçлеççĕ. Парторганизаци тăшмансен сатăрла ĕçĕсен йулашкисене пĕтерессинчен ыйту лартнисĕр пуçне нимĕн те туман.

Çĕнĕ парторг Оçипăв йул. ку таранччен малтан ĕçленĕ парторгран парторганизаци ĕçĕсене акт çырса йышăнман. Протоколсене çĕлесе туман.

Парти райкомĕн пуçламĕш парторганизацисенче отчотпа суйлав пухăвĕсем йышăннă решенисене пурнăçа кĕртесси мĕнле пыни çинчен тĕрĕслесе тухмала, вăл решенисене пурнăçа кĕртме пуçламĕш парторганизацисене куллен-кун пулăшса пымала.

П. Перлов.

Суйлав кампанинчи активиссем партине кĕреççĕ

ССР Союзĕн Верховнăй Советне суйланă вăхăтра коммунисcемпе комсомолĕцсем, партире тăман активиссем те агитатăрсем, доверĕннăйсем пулса ĕçленĕ. Суйлав иртнĕ хыççăн çак активиссенчен хăшпĕрисем парти ретне кĕнĕ. Вăрнар МТС-ри трактăр бригадин бригадирĕ Мишаков йулташ, Флегентăв учитĕл, Чапайĕв йачĕпе тăракан колхоз председателĕ Шлыкăв т. ыт. йулташсем партине кĕнĕ. Ку йулташсем партине кĕнĕ хыççăн хăйсен пултарулăхне ĕçре кăтартрĕç. Халĕхи вăхăтра Мишаковпа Флегентăв йулташсем округри суйлав комиççи членĕсем. Йемелйанăв йулташ округри суйлав комиççин çекретарĕ пулса ĕçлет.

РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлама хатĕрленнĕ май, Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă кандидатсем партине кĕме ыйтусем параççĕ. Июнĕн 10-мĕшĕнче ПСК(б)П Вăрнар райкомĕ Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă кандидата, МТС-ри трактăр бригадин бригадирне Й. К. Харитонăва йулташа партине илнĕ.

ПСК(б)П райкомĕ çавăн пекех июнĕн 20-мĕшĕнче Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă кандидата Йĕрмошканăри йалсовет председателне Виноградăва йулташа парти ретне илнĕ. Виноградăва йулташ иртнĕ суйлавра участкăри суйлав комиççин председателĕ, Харитонăва йулташ участкăри суйлав комиççин членĕ пулса ĕçленĕ.

Германи фашисăмĕн Скандинаври планĕсем

„Пысăк вăрçă" пуçлама урса кайсах хатĕрленсе, фашисла Германи çине тăрсах хăйне вальльи кирлĕ чухлĕ апат-çимĕç, стратеги тĕлĕшĕнчен кирлĕ чĕртавар хатĕрлесе хума тăрăшать. Вăл хăйĕн аллисене Йевропăн кăнтăр-хĕвелтухăç йеннеле—Венгрипе Йугослави тырри патнеле тата Румыни нефти патнеле калама çук чăрсăррăн тăсать, çавăн пекех çине тăрса Скандинаври çĕршывсем çине ăмсанса туртăнать, унта вăл Даниререн сысна какайĕ, пахча-çимĕçсем тата аш-какай илме, Швецирен—тимĕр тăпри, Финльандирен—йăвăç илме шутлать. Сăлтавсăр мар ĕнтĕ Гитлĕр Скандинави çĕршывĕсене економикă плацдармĕ вырăнне кăна шутламасть, вăл вĕсене хăйĕн йут çĕршывсене туртса илме шутласа хунă планĕсене пурнăça кĕртмели стратегилĕ плацдарм вырăнне шутлать.

Скандинаври 5 çĕршыв—Швеци, Норвеги, Дани, Финльанди тата Исланди—економикă тĕлĕшĕнчен пысăк пуйанлăхлă çĕршывсем, çакна шута илсен ĕнтĕ агрессăр вĕсем çине çăткăн куçсемпе пăхнине пит те аван ăнланма пулать. Вăл çĕршывсенче 17 мĕлйун çын шутланать. Тĕнчери суту-илÿре Скандинави çĕршывĕсем пиллĕкмĕш вырăн йышăнса тăраççĕ. Суту-илÿ флочĕн хăвачĕ тĕлĕшĕнчен пăхсан Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсем кăна Скандинави çĕршывĕсенчен малта тăраççĕ, суту-илÿ флочĕн пĕтĕм тĕнчери тоннажĕнчен 10,6 проценчĕ Скандинави çĕршывĕсем çине ÿкет.

Скандинави пĕтĕм тĕнчери рынакра йăвăç тата цельльулозă пит нумай сутать, Йевропăна пулă сутса тăрас ĕçре вăл тĕп вырăн йышăнать, урăх çĕршывсене тимĕр тăпри сутас тĕлĕшрен тĕнчери пĕрремĕш вырăнсенчен пĕрне йышăнса тăрать.

Нумайах та пулмасть Германири „Дерострзееераум" йатлă журнал çапла çырнă: „Германин Балтикă тинĕсĕ çинчи коммуникацийĕсене мĕн кирлине йăлтах çителĕклĕ тăратасси Германишĕн пурнăçпа вилĕм ыйтăвĕ пулса тăрать, мĕншĕн тесен Скандинави Германийе материалсем парса тăракан çăлкуçĕ пулса тăрать.. Мĕнле те пулин государствăн геополитикă тĕлĕшĕнчи лару-тăрăвĕ Дани государствин пек пулсан, вăл государствă, хăйĕн нейтралитетне сыхласа тăма пултарайманнине кура, икĕ аслă державă хушшинчи вăрçа обйекчĕ пулса тăмала".

Кунтан та уççăнрах каласа пама та йăвăр.

Скандинавине харпăрхăй йенне сулăнтарассишĕн пыракан кĕрешÿ нихçан та йăвашланмасть. Тĕнче вăрçи вăхăтĕнче Германи пурнăçшăн кирлĕ йапаласене тата вăрçа материалĕсене Скандинави çĕршывĕсенчен илсе тăнă. Вăрçă пуçлансан малтанхи кунсенчех Германи Данине ирĕксĕрлесех Пысăк Бельтăра минăсем ларттарса тухтарнă, Зундран Балтикăна тухмали вырăна талкăшпех минăсемпе, çавăн пекех тата карусемпе пÿлсе хунă. Çав проливсенче ун чухне Германи хăйĕн миноносĕцĕсемпе канонерлă киммисене тăратса тухнă, унта йаланах сăнаса пăхса тăмала тунă. Вăрçă карапĕ тухса çÿремешкĕн кăна ансăр хаппасем хăварнă пулнă. Чăнах та, вăрçă пĕтсе пынă тĕлеле Германи вăл резервсемсĕр тăрса йулнă, мĕншĕн тесен Англипе Америкă Скандинави çĕршывĕсене йунаса хăратнă, есĕр Германине тĕрлĕ йапаласем тăратма чарăнмасан, сирĕн пĕтĕм тинĕс карапĕсене туртса илетпĕр, тенĕ.

Йулашки вăхăтра Скандинавире пуринчен ытла Англи хăйĕн вăйне сарса йанă. Германи, уйрăмăнах влаçа Гитлĕр çавăрса илнĕ хыççăн, хăй çĕршывне таварсем илсе пырассине, уйрăмăн илсен Скандинави çĕршывĕсем таварсем илессине пыссăккăн чакарнă. Лешсем вара çакна хирĕç ответлесе Германи хăйсем патне таварсем парса сутассине хирĕç пусмăрлусем пуçласа йанă. Англи çавăн пек пулса тăнă лару-тăрупа усă курса Скандинаври çĕршывсемпе хăй суту-илÿ тăвассине вăйлатса йанă.

Çапла пулса тăни вара Англипе Германи хушшинче Скандинави рынăкĕшĕн пыракан кĕрешĕве вăйлатса йанă.

Германи, Скандинаври çĕршывсенче стратеги тĕлĕшĕнчен кирлĕ чĕрт аварсем туйанса тăнă вăхăтрах вăл çĕршывсене хăйĕн таварĕсене нумайрах сутасшăн тăрăшать.

Скандинаври çĕршывсенчен Германи стратегишĕн кирлĕ чĕртаварсене мĕн тери нумай илсе тăнине пĕр çакăнтан та курма пулать: Германири хурçă производствин çур пайĕ Швецирен илекен тимĕр тăприпе ĕçлесе тăрать.

Швецири Бофорсăн пит те пысăк çар савăчĕсем Германири Крупп савăчĕсемпе пит те тачă çыхăнса тăраççĕ. Германи промышлĕнникĕсем Норвегире кăларакан пĕрчĕлĕ колчедана пĕтĕмĕшпе пекех сутăн илсе тăраççĕ тата Скандинавире органикăлă çусенчен (пулă) глицерин туса хатĕрлес ĕçе хутшăнаççĕ. Колчедан та, глицерин та вăрçă вальльи химилĕ средствăсем тата сиктерсе сирпĕтекен йапаласем туса хатĕрлемели пит те паха чĕртавар пулса тăраççĕ.

Скандинаври çĕршывсен пурнăçне економикă тĕлĕшĕнчен кĕрсе пынипе пĕрлех, Германи вăл çĕршывсен политикине те хăйне май çавăрасшăн пикенет. Берлин Скандинави çĕршывĕсене „пулас вăрçăра" „нейтралитет" тыттарасшăн тăрăшать.

Вăл „нейтралитет" вара çав государствăсене коллективлă хăрушăсăрлăх çистеминчен татса илес ĕçре Германи фашисăмĕшĕн вăл çĕршывсене туртса илме, вĕсемпе вăрçă плацдармĕ вырăнĕнче, усă курма çăмăлрах пулать.

Скандинаври çĕршывсен правителствисем, пуринчен те малтан Швеци правителстви, фашисла агрессăр тĕлĕшпе усă та палла политикă тытаççĕ.

Хăйĕн агентури урлă, çавăн пекех тата буржуалă реакцилĕ ушкăнĕсем урлă Скандинаври çĕршывсен тулти политиккине хăйне кирлĕ май çавăрттарма тăрăшать. Швецире, сăмахран, парламентра та, çавăн пекех тата çар çыннисем хушшинче те уççăнах фашисла агрессăрсем майлă тăракансем пур. Икĕ тăван—адмирал де-Шамп тата генерал де-Шамп—Германи майлă тăракан çынсем. Паллă промышлĕнник Торстен Крейгер (кризис вăхăтĕнче хăйне хăй вĕлернĕ Ивар Крейгерăн, Швецире спичкăсен королĕ пулнăскерĕн тăванĕ) Швецири тĕрлĕрен фашисла ушкăнĕсене, вăл шутрах ирсĕр те мĕскĕн троцкисла-фашисла ушкăна та, укçа-тенкĕ парса тăрать. Троцкисла-фашисла ушкăн вара Германин вăрттăн полиципе (Гестапопа) пит те тачă çыхăнса тăрать. Швеци хаçачĕсем хăй вăхăтĕнче çапла çырвăччĕ: Германин Швецири посланникĕ нумай укçа-тенкĕ илсе тăрать. Вăл укçа-тенкĕ Гитлĕр агенчĕсем Швецире сăтăрла ĕçлесе тăрÿлĕ ĕçсем тунă çĕре кайать; Германи хăйĕн агентурипе пĕтĕм Швецийе çавăрса илнĕ.

Германи фашисăмĕ Австрийе сĕмсĕррĕн туртса илни Скандинави общественнăçне калама çук хытă çилентерсе тарăхтарнă. Скандинаври çĕршывсен правителствисем хăйсен çĕршывсен оборонине тĕреклетес тĕлĕшне тумали ĕçĕсене вăйлатма тытăнчĕç. Дани фолькстагĕ (парламĕнчĕ) 50 мĕлйун кронлăх шалти займ кăларассине ырланă; вăл займ укçи сывлăшран тапăнасран сыхланас ĕçе вăйлатнă çĕре тата вăрçа пулас-мĕн пулсан чĕртавар запасĕсем хатĕрлесе хурас ĕçе кайать. Çавăн пек тĕллевпех Норвегире 52 мĕлйун кронлăх шалти займ кăлараççĕ. Финльанди сеймĕ вăрçă ĕç строителстви тĕлĕшпе çывăхри 7 çул хушшинче тума палăртнă плана пурнăça кĕртме 2.700 мĕлйун маркă уйăрса хума йышăнса çирĕплетнĕ. Швеци çар ĕçĕсем вальльи 70 мĕлйун ытла Швеци кронĕлĕх чрезвычайлă росхутсем тăвассине ырланă.

Çаксемпе пĕрле Скандинаври çĕршывсен политикинче хăйулă та татăклă сулăмсăр курăнмасть; вĕсен политики йаланах пăркаланать. Ку ĕнтĕ, паллах, Германи фашисăмĕн йут çĕршывсене туртса илес ĕмĕчĕсене çунатлантарса тăрать.

Скандинаври çĕршывсем хăйсем ирĕккĕн пурăнассине, вĕсем никама та пăхăнса тăрас маррине сыхлас политикăна пĕр пăркаланмасăр тытса пыракан пĕртен-пĕр вăй вăл—коммунисла партисем тата вĕсен политикишĕн тăракан ĕççыннисен анлă массисем. Скандинаври çĕршывсенчи коммунисла партисем хăйсен миршĕн пыракан кĕрешĕвĕнче фашисăма хирĕç пур партисен, ĕççыннисен пур массăлă организацийĕсен пĕрлех фронтне туса хурассишĕн тăрăшаççĕ. Гитлĕр агентурин Скандинаври киревсĕр ĕçĕсене хирĕç, Германи фашисăмĕн йут çĕршывсене туртса илме шутласа хунă планĕсене хирĕç татăклă отпор пама коммунисла партисем массăсене мобилизацилеççĕ.

Г. Б.

Пӗтӗм халӑх праҫникӗ умӗн

Ийунӗн 24-мӗшпе 26-мӗшӗнче аслӑ Совет Союзӗнчи тахӑр республикӑри-телейлӗ халӑхсем хӑйсен депутачӗсене Верховнӑй Советсене суйлаҫҫӗ.

Аслӑ Совет ҫӗршывӗн пур кӗтесӗсенче те суйлав умӗнхи ӗҫ хӗрӳлӗн пулса пырать. Суйлав ҫурчӗсене лозунгсемпе, плакатсемпе, чечексемпе илемлетеҫҫӗ. Сасӑламалли пӳлӗмсене йеркелеҫҫӗ. Дачӑсене, йалсене пурӑнма кайнӑ суйлавҫӑсен спискисене тӗреслесе пӗтереҫҫӗ. Суйлавҫӑсем депутата суйлама палӑртнӑ хӑйсен кандидачӗсемпе тӗл пулаҫҫӗ. Суйлавҫӑсем хӑйсен кандидачӗсене ӑшшӑн кӗтсе илеҫҫӗ.

Агитатӑрсен пысӑк ҫарӗ суйлавҫӑсем патне килне пырса агитаци ӗҫне туса пырать. Агитатӑрсенчен чылайӗшӗсем кашни суйлавҫӑна уйрӑмшарӑн пӗлеҫҫӗ. Суйлавҫӑсем хушшинче пысӑк ӗҫ туса пырса, суйлав кампанийӗнче ӗҫлекен агитатӑрсемпе активиссем ҫав ӗҫре ӳссе пыраҫҫӗ. Перм хулинчи суйлав участкисенче ӗҫлекен 50 йахӑн активис партине кӗме зайавленисем панӑ.

Участкӑсенчи агитацилӗ ӗҫ совет гражданӗсене мӗлӗйуншарӑн хӑй тавра пӗтӗҫтарать. Суйлавсене хатӗрленнӗ май пур ҫӗрте те тӗнче пекех социализмла ӑмӑрту хумӗ ҫӗнӗрен ҫӗкленнӗ. Питех те интереслӑ докладсем, митингсем, екскурсисем туса ирттереҫҫӗ. Ҫавӑн пек интереслӑ пухӑва Уссурийск облаҫӗнче, чикӗ ҫывӑхӗнчи Покровкӑ йалӗнче туса ирттернӗ. Пухура пулнисенчен чи ҫамрӑкки Балуйевӑ йулташ—50 ҫулта, чи ватти Гостейӗв йулташ—103 ҫулта. Гродековски суйлав округӗнчи ватӑ суйлавҫӑсем хӑйсен РСФСР Верховнӑй Советне депутата суйлама палӑртнӑ кандидатпа—паллӑ пограничник орденоносец Павел Михайлӑвич Дудинпа тӗл пулма илемлетнӗ клуба пухӑннӑ.

Стариксем ӗлӗкхи йавӑр пурнӑҫ ҫинчен хӑйсен асаилӗвӗсене каласа панӑ, халӗ вӗсем мӗнле пурӑнни ҫинчен каласа кӑтартнӑ.

Унтан Дудин йулташ сӑмах каланӑ. Стариксем хӑйсен кандидачӗн Дудин йулташӑн ӑшӑ сӑмахне пысӑк тимлӗхпе итленӗ.

Мински Дзержински суйлав округӗн (Минск) пӗрремӗш участкӗ ҫурт чӳречисенчен пӑхсан, хула хӗрринчи кварталсем калама ҫук илемлӗн курӑнаҫҫӗ. Ӗлӗк пушӑ вырӑнта выранӗсенче Сталинла пиатилеткӑсен ҫулӗсенче ҫӗнӗ предприйатисем ӳссе ларнӑ. Ҫӗвӗ ҫӗлекен „Октябрь“ хапрӗкӗн, Куйбышӗв йачӗпе тӑракан тир сӑрӑнпа галантерейӑ хапрӑкӗн, Крупскайа йачӗпе тӑракан хапрӑк корпусӗсем пӗлӗтеле кармашса лараҫҫӗ тата ыт. те. Ҫав округра Белоруҫҫи СС Республикӗн Верховнӑй Советне депутата суйланма Совет правительствин пуҫлӑхӗ Вйачеслав Михайлӑвич Молотӑв килӗшӳ панӑ.

Майор Фирсӑв йулташ йертсе пыракан чаҫри бойецсем, командирсемпе политработниксем суйлав кунне калама ҫук пысӑк ҫӗкленӳпе хатӗрленеҫҫӗ. Чаҫри подразделенисем суйлав кунӗнче—ийунӗн 26-мӗшӗнче хисеплӗ вахтӑна тӑрас права илессишӗн ӑмӑртаҫҫӗ.

Украинӑ СС Республикӗн Верховнӑй Совет суйлавӗсене хатӗрленессине Хура тинӗс ҫинчи карапсен екипажӗсем стахановла ӗҫӗн пысӑк тӗслӗхне кӑтартнипе паллӑ тӑваҫҫӗ. „Франц Меринг“ пӑрахут ҫинчи командӑ суйлавсен йачӗпе пӑрахута хӑйсен вӑйӗпех йусанӑ. Йатарласах тунӑ комиссипӑрахута лайӑх йусанӑ, тесе йышӑннӑ. Пароходствӑ начальникӗ екипаж членӗсене премин памала тунӑ.

Украинӑ СС Республикӗн Верховнӑй Советне суйламалли кунӑ Хура тинӗс ҫинче ҫӳрекен вуншар карапсем таван ҫыранӗсенчен инҫетри выранӗсенче кӗтсе илеҫҫӗ. Вӗсене суйлав документӗсемпе материалсем ҫителӗклӗ илсе пырса панӑ. Карапсем ҫинче суйлав умӗнхи агитацилӗ массӑлӑ ӗҫ хӗрӳлӗн сарӑлса кайнӑ.

(ТАСС).

Слесӑр-инструментальщик Швиненко йулташ тӗнчипе паллӑ рекорд тунӑ

КИЙӖВ, ийунӗн 21-мӗш. (ТАСС). Кийӗври станоксемпе автоматсем тӑвакан Горький йачӗпе тӑракан саватри суйлавҫӑсен суйлав умӗнхи пухӑвӗнче инструментальнӑй цехри слесӑр, саватри чи лайӑх стахановец Н. И. Швиненко йулташ, Украинӑ СС Республикӗн Верховнӑй Советне депутата суйлама кандидат, Сталинӑн шанчӑклӑ соратникне, Украина большевикӗсен руководителне Н. С. Хрущова палӑртса, суйлав кунне производствӑра рекорд ҫӗнтерӳ тунипе паллӑ тума хӑй ҫине обязательство илнӗ пулнӑ.

Ийунӗн 20-мӗшӗнче Швиненко йулташ 2 сехет те 4 минут хушшинче сменӑри нормӑна 500,2 процент тултаркӑ, ҫав кун вӑл 1.469 тенкӗ ӗҫлесе илнӗ.

Швиненко йулташ металлсем ӗҫлекен станоксем валли кулачковӑй текен патронсем тунӑ. Техникӑлӑ контроль пайӗ вӑл тунӑ детальсене „отлично“ хак парса йышӑннӑ.

Ҫав кунхинех инструментальнӑй цехра митинг пулса иртнӗ. Саватри стахановецсем рабочисем тата савата йертсе пыракансем Швиненко йулташа тӗнчипе чаплӑ рекорд тунӑшӑн ырӑ сунса тав тунӑ.

Тырӑсем пулса ҫитеҫҫӗ

Кантӑрти районсенче хӗвел ытти тӑн хӗртсе пахать. Тырӑсем хӑвӑрт пулаҫҫӗ. Сталинград тата Ростов облаҫӗсенче, Саратӑв облаҫӗн кантӑр хӗвелтухӑҫ пайӗнче, Одесса, Николайӗвск тата Днепропетровск облаҫӗсен кантӑр пайӗсенче ыраш пулса ҫитнӗ. Ҫитес кунсенче Украинӑн кантӑр-хӗвелтухӑҫ пайӗнче те ыраш пулса ҫитет.

Кӗрхи тулӑна часах массӑллӑн вырма тытӑнаҫҫӗ. Вӑл культура Краснодар крайӗн кантӑр-хӗвеланӑҫ йенчи уйхирсенче, Орджоникидзе крайӗн хӗвелтухӑҫ йенчи районсенче пулса ҫитнӗ сӗтӗ. Тулӑ пур ҫӗрте те пит лайӑх.

Ҫавӑн пекех Узбекистанри Самаркӑнд районӗнче, Кара-Калпакире, Киргизири кантӑр-хӗвеланӑҫ йенчи районсенче тата Кантӑр-Казахстан облаҫӗн кантӑр-хӗвелтухӑҫ пайӗнче те кӗрхи тулӑ пулса ҫитнӗ. Тулӑ кунта та лайӑх пулнӑ.

Вӑтам Азири республикӑсенче чылай районсенче ҫурхи урпа пулса ҫитнӗ.

Иртнӗ ҫулхипе танлаштарсан кантӑр-хӗвелтухӑҫ йенчи районсенче тырӑсем чылай малтан пулса ҫитнӗ. Кантӑрти колхозсемпе совхозсем хӗрӳлӗ ӗҫе тытӑнаҫҫӗ. (ТАСС).

„И. Сталин“ пӑрҫӗмрен тинӗсе тухса кайнӑ

„И. СТАЛИН“ Пӑрҫӗмрен борчӗ, ийунӗн 22-мӗш. (ТАСС-ӑн Игаркари хӑйӑн корреспонденчӗ). „И. Сталин“ пӑрҫӗмрен ийунӗн 22-мӗшӗнче 21 сехет те 10 минутра механисӑмсем мӗнле ӗҫленине санаса пӗлме тинӗсе тухса кайнӑ, ун хыҫҫӑн вӑл Арктикӑра ишме тухса каймала.

Н. Огнӗв писатӗл вилнӗ

Ийунӗн 22-мӗшӗнче Мускавра, Кремлӗри пульницӑра, кӗҫнине 8 сехет те 25 минутра, йавӑр чирлесе выртнӑ хыҫҫӑн, Н. Огнӗв (М. Г. Розанӑв) писатӗл вилнӗ. (ТАСС).

Йут ҫӗршывсем валли паракан радиоконцертсем

Йут ҫӗршывсенче ССР Союзӗнчи халӑхсен творчествине интерес ӳссе пырать. Пӗтӗм Союзри радиокомитет ССР Союзӗнчи халӑхсен музыкӑ образецӗсемпе радио итлекенсене паллаштарма ыйтса ҫырнӑ ҫырусене тӗрлӗ ҫӗршывсенчен илет.

Йулашки вӑхӑтра Америкӑ, Турци, Афганистан тата Иран валли радиоконцертсем панӑ, ҫав концертсене совет сценӑлӑ искусствин паллӑ маҫтӑрӗсем, художествӑлӑ пултарулӑхӑн чи лайӑх коллективӗсемпе ансамблӗсем выҫланӑ. Ийунӗн 19—20-мӗшӗсенче Мускавран радиоконцертсем Швеци, Норвеги тата Чехословаки валли панӑ.

Ийунӗн 22-мӗшӗнче Китай валли радиоконцерт панӑ. Йут ҫӗршывсемпе культурӑлла ҫыхӑну тытас тӗлӗшпе ӗҫлекен Пӗтӗм Союзри обществӑпа радио тӑрӑх паттӑр Китайӑн халӑхне саламлӑ ҫыру йанӑ. Ун хыҫҫӑн Китайри радио итлекенсене Совет Союзӗнчи массӑллӑ йурӑсемпе, совет композиторӗсен произведенийӗсемпе, Грузинпе Казах халӑхӗсен йуррисемпе паллаштарнӑ. (ТАСС).

„Рабочисемпе Хресченсен Хӗрлӗ Ҫарӗ XX ҫул тултарни“ выставкӑра

ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: „Ҫекретра“ — А. К. Жаба художник картинӗ. (Сойузфото репродукцийӗ)

Йут ҫӗршывсенче

Франци правительствин йурӑхсӑр политики

ПАРИЖ, ийунӗн 21-мӗш (ТАСС). Габриел Пери „Юманите“ хаҫатра статйа пичетлесе кӑларнӑ, унта Франци правительстви ийунӗн 13-мӗшӗнчен пуҫласа Франципе Испани хушшинчи чиккӗне хупни ҫинчен ҫирӗплетсе ҫырнӑ. „Лондӑнри комитет кирек мӗнле решени йышӑнать пулин те,—тесе ҫырать Пери,—ийунӗн 13 мӗшӗнчен пуҫласа республикӑлла Испанипе ҫыхӑнса тӑрассине хупӑрласа лартнӑ, ҫав вӑхӑтрах пӑлхавҫӑсен аллинчи портсем сарлаканах уҫҫипе йулаҫҫӗ. Франци правительстви йышӑннӑ тӑрӑх туса хунӑ йеркеЛондӑнри комитет туса хунӑ йеркерен те начар тесе каласан, ытлашши пулмӗ“.

Поль Низан „Се суар“ йатлӑ хаҫатра ҫапла ҫырать: „Франци правительстви Лондӑнри комитет хӗснипе туса хунӑ пек Муссолини те нихӑҫан та тума хӑйас ҫук“.

Жиромский „Популер“ хаҫатра „Испани республики ҫине тата Франци хӑрушсӑрлӑхӗ ҫине ҫӗнӗрен алӑ ҫӗклени“ ҫинчен калать. „Муссолини хӗсни тата шантаж туни,—тесе ҫырать вӑл,—тата тепӗр хут ӑнӑҫлӑн пулчӗ. Епӗр кайала чакрӑмӑр. Франци правительстви Испани республикӗн кӗрешӳне чӑрмантарса пырать. Франци республикӗн правительстви Испанире тип ҫӗр ҫинче те тата сывлӑшра та агрессӑрсене опорлӑ пунктсем тума, ҫавӑн пекех тата вӗсене тинӗссем ҫинче ҫар базисене тума, тӳрӗмӗнех Францине хирӗҫ тӑратнӑскерсене, хӑй пулӑшать. Йулашкинчен Жиромский ҫапла ҫырать: „Правительствӑ пултарусӑр тата унӑн йӑвашчунлӑхӗ пирки пӗр ҫул кӑна тӑрса йулать—халӑх массисенку тӗлӗшпе правительствӑна хӗсмеле, унӑн йурӑхсӑр ҫулне сӗрӗшывӑ вилӗм патне ҫӗтерсе кайакан ҫулне кӑртмала“.

Салтаксем Германи ҫарӗнчен тараҫҫӗ

Прагӑ хулинчен пӗлтернӗ тӑрӑх, йулашки кунсенче Германи салтакӗсем ҫарсенчен тарса тухнисем тата вӗсем Чехословаки йенне тарса каҫнисем пулнӑ. Чехословаки территорине тарса каҫнӑ Германи салтакӗсем каласа панӑ тӑрӑх, вӗсем Гитлӗрӑн офицерӗсем салтаксем ҫине тискеррӗн пӑхнӑ пирки тата апат пит начар ҫитернипе тарнӑ.

(ТАСС).

Ҫамрӑк хӗрарӑмсен республикӑри II-мӗш сийесӗ хупӑнчӗ

Ҫамрӑк хӗрарӑмсен республикӑри II мӗш сийесӗ ийунӗн 22-мӗшӗнче ӗҫсене туса пӗтерсе хупӑнчӗ. Ҫак кун сийес делегачӗсем нумайӗшӗ доклад тӑрӑх тухса каларӗҫ. Унтан Никифӑрав йулташ хӑйӗн доклачӗ тӑрӑх калана йулашки сӑмаха итлерӗҫ те Тутар республикӗнчи ҫамрӑк хӗрарӑмсен сийесне кайма ССР Союзӗн Верховнӑй Совет депутатне Т. А. Моисейӗва йулташа тата комсомол обкомӗн пионер пайӗн пуҫлӑхне А. Моисейӗва йулташа суйларӗҫ.

Сийес делегачӗсем пысӑк хавасл ӑхпа тӑвӑллӑн алӑ ҫупса тата „ура“ кӑшкӑрса Сталин йулташ патне саламлӑ ҫыру йама йышӑнчӗҫ.

Ҫакӑн хыҫҫӑн сийес хупӑнчӗ.

Учительсенчен мӑшкӑлани

Чӑваш АСС Республикӗнче учительсене ӗҫрен чухӑмӑн, массӑлӑн кӑларса йанисем пулнӑ. Чӑваш АССР Ҫутӗҫ Халӑх Комиссарӗ Оҫипӑв й. йанварӗн 14-мӗшӗнчи приказӗпе Хӗрлӗ Чутай т. ыт. районри 25 учительӗ ӗҫрен кӑларнине ҫирӗплетнӗ.

РСФСР Ҫутӗҫ Халӑх Комиссариачӗ—ӗҫрен сӑлтавсӑрах кӑларнӑ учительсене кайала ӗҫе илме тата вӗсем ҫинчен реабилитироват тума хушнӑ, анчах Оҫипӑв ҫав распорйаженине пурнӑҫа кӗртмен. Хӑйсен жалӑбисене пӑхса тухасса вуншар учительсем уйӑхӗ-уйӑхӗпе кӗтсе пурӑннӑ.

РСФСР Ҫутӗҫ Халӑх Комиссарӗ Туркин йулташ Чӑваш АССР Тӗпӗҫтавкомӗ умне Оҫипӑва Ҫутӗҫ Халӑх Комиссарӗн ӗҫӗнчен халех кӑларасси пирки ыйту лартнӑ. Оҫипӑва уголовлӑ йеркепе ответ тыттарма тӗреслӳ материалӗсене РСФСР прокурорне параҫҫӗ.

Сӑккунсӑрах ӗҫрен кӑларнӑ учительсене халех ӗҫе илмеле.

(„Известия“, ийунӗн 20 мӗш).

Йулашки почтӑран

Чӑвашгиз редакторӗсем „редакцилеҫҫӗ“...

Суйлавҫӑсене коммуниссемпе партире тӑманнисен сталинла блок кандидачӗсен биографийӗсемпе паллаштарасси—хисеплӗ те чыслӑ ӗҫ Анчах Чӑвашгизпа Чӑвашполиграфтрестӑн йаланхи мӗшӗлти ӗҫсеммине пула, ҫак листовкӑсем пит те кайа йулса тухаҫҫӗ. Суйлавчен икӗ кун ҫеҫ йулчӗ, хӑшпӗр листовкӑсене халӗ те пичетлесе пӗтермен.

Ҫитменнине тата листовкӑсем йӑнӑшсемпе тухаҫҫӗ. Чӑваш АССР Верховнӑй Советне депутата суйлама Тӗрлемеҫ суйлав округӗнче тӑратнӑ кандидат — Пожеданӑв Александр Иванӑвич пурнӑҫӗпе ӗҫӗсем ҫинчен каланӑ листовкӑра вулатпӑр: „Поханӑв, Александр Иванӑвич 1897 ҫулта, чухӑн хресчен ҫемйинче Йӗпреҫ районӗнчи Ҫӗрпӳ—Тухан йалӗнче ҫуралнӑ“.

Чӑваш республикӗн картти-тӑрӑх темле шырасан та ҫавӑн пек йал Йӗпреҫ районӗнче мар, ытти районсенче те тупма ҫук. Пожеданӑв йулташ Чӑвашгиз редакторсем шухӑшласа кӑларнӑ Ҫӗрпӳ-Тухан йалӗнче мар, Хырхӗрри йалӗнче ҫуралнӑ.

Йӑнӑшсем ытти листовкӑсем ҫинче те сахал мар. Чӑваш АССР Верховнӑй Советне депутата суйлама Ӳсӗк суйлав округӗнче (Трак р.) палӑртнӑ кандидат Н. М. Ҫеменӑв йулташ 1927 ҫулта Крупскайа йачӗпе тӑракан Коммунисла воспитани академине кайса кӗнӗ. Унтан вӑл 1931 ҫулта веренсе тухнӑ. Листовкӑна ӗненсен Ҫеменӑв йулташ академиче вӗренме кӗнӗ ҫулах — 1927 ҫултах вӗренсе тухнӑ мӗн...

Пулни-иртнисем

АЧИНЕ ВӖЛЕРЕКЕН. Йанӑм йалсоветӗнчи Соваткин йалӗнчи (Тутаркас р.) Марфӑ Ҫеменӑвӑ май уйӑхӗнче ача ҫуратса, ачине михӗпе чул ҫыхса Кирӑв йачӗпе тӑракан колхоз пӗвине пӑрахнӑ. Халӗ ачине тупнӑ. Ҫеменӑвӑна суда панӑ.

АҪА-ҪИҪӖМ СИЙЕНӖ. Киччӗ йалӗнчи (Тӑвай р.) Пелагейа Бухрӑвӑна ийунӗн 12-мӗшӗнче, аҫаҫиҫӗм вӑхӑтӗнче пӳртре, уҫнӑ чӳрече умӗнче ларнӑ чухне, аҫа ҫапса вӗлернӗ. Ийунӗн 14-мӗшӗнче аҫаҫиҫӗм ҫапнипе Тӗмер йалӗнчи (ҫав районах) Иван Коньайӗв хуҫалӑхӗ ҫунса кайнӑ.

Ответлӑ редактӑр Н. М. СЕМЕНАВ.

Кӑҫал ийунӗн 27-мӗшӗнчен ийулӗн 2-мӗшчен

Шупашкар хулинче Чапайӗв поҫолкинчи пасарта

кунлӑх 5 кунлӑх

республикӑри йармӑркӑ

ПУЛАТ

Суту-илӳ организацийӗсем промышлӗннӑҫ, апат-ҫимӗҫ, хуҫалӑх тата культурӑ таварӗсене

тӗрлӗ суртлисене нӳрсе килеҫҫӗ.

Пур колхозсене, колхозниксене тата уйрӑм хуҫалӑхлӑ хресченсене йалхуҫалӑх продуктисемпе килме чӗнеҫҫӗ: выльӑх-чӗрлӗх, кайӑк-кӗшӗк, аш-какай, пахча-ҫимӗҫ, ҫӑмарта, сӗт, ҫу, ҫырласем тата ытти продуктӑсене те илсе килмеле.

ЙАРМӐРКӐРА ЦИРК, ачасен пукане театрӗ, марионеткӑсен театрӗ — ӗҫлеҫҫӗ, каруҫелсем пулаҫҫӗ тата

СТОЛОВӐЙ, РЕСТОРАН ПУЛАТ.

Справкӑсене йармӑркӑ комитетӗнчен тата хулари суту-илӳ пайӗнчен ыйтса пӗлмеле. Адрӗс: г. Чебоксары, ул. К. Маркса, д. № 1, тел. № 4—88, ЯРМАРКОМ.

ССРС Финанс Халӑх Комиссариачӗн

ЛЕНИНГРАДРИ ФИНАНСПА ЕКОНОМИКӐ

ИНСТИТУЧӖ

1938—1939 ВӖРЕНӲ ҪУЛНЕ

студентсем илесси ҫинчен пӗлтерет

Институт финанспа кредит системи валли

ПЫСӐК КВАЛИФИКАЦИЛӖ

СПЕЦИАЛИССЕМ ХАТӖРЛЕТ

Институтран вӗренсе тухнисем тата государствӑ екзамӗнне тытнисем економист-финансист йатне илеҫҫӗ.

Института вӑтам шкултан (рабфак, техникум, вунӑ ҫуллӑ шкул) вӗренсе тухнисене илеҫҫӗ.

Зайавленисене 1938 ҫ. ийунӗн 20-мӗшенчен августӑн 1 мӗшчен йышӑнаҫҫӗ.

Августӑн 1-мӗшпе 20-мӗш хушшинче ҫак предметсемпе испытани пулать: а) вырӑс чӗлхи (ҫыру, грамматикӑ тата литературӑ), б) политграматӑ, в) математикӑ, г) физикӑ, д) хими, е) географи, ж) пӗр-пӗр йут ҫӗршыв чӗлхи (акӑлчан, нимӗҫ, француз—вӗренме кӗрекен суйласа илнӗ тӑрӑх).

Испытани Горький хулинче пулать. Вӗренме кӗнисем Ленинграда ҫул укҫи тӳлемесӗр кайаҫҫӗ.

Заньатисем 1938 ҫ. ҫевтӑберӗн 1-мӗшӗнче пуҫланаҫҫӗ.

Института илнисене общежити тата стипенди параҫҫӗ.

Справкӑсем ҫак адрӗспе ыйтса пӗлмеле: г. Горький, площадь 1-го мая, школа имени Сталина.

ДИРЕКЦИ.

1938 ҫ. II-ш ҪУР ҪУЛШӐН республикӑра тухакан хаҫат-журналсене кирлӗ таран ҫырӑнса илме ПОДПИСКӐ ЙЫШӐНАҪҪӖ

1938 ҫулта Шупашкарта тухакан хаҫат-журналсем

ХАҪАТ-ЖУРНАЛ ЙАЧӖСЕМ	Мӗнле чӗлхепе тухать	Уйӑхра миҫе №	Ҫырӑнса илмели хаксем: 1 уйӑха т.	пус	3 уйӑха т.	пус	6 уйӑха т.	пус
Хаҫатсем:								
Чӑваш Коммунӗ	чӑвашла	25—26	2	50	7	50	15	—
Красная Чувашия	вырӑсла	25—26	2	50	7	50	15	—
Ҫамрӑк большевик	чӑвашла	12	—	60	1	80	3	60
Пионер сасси	„	5	—	25	—	75	1	50
Радиопередачӑсен программи (Чӑваш радиокомитетӑн)	„	2	—	—	—	60	1	20
Стахановла хӑвӑртлӑхшӑн (Канаш-Шупашкар чугунҫул строительстви Управленийӗн хаҫачӗ)	вырӑсла чӑвашла	10	—	50	1	50	3	—
Журналсем:								
Ленин ҫулӗпе	чӑвашла	2	—	50	1	50	3	—
Ӗҫхӗрарӑмӗ	„	1	—	50	1	50	3	—
Сунтал	„	1	1	—	3	—	6	—
Капкӑн (кулӑш шурналӗ)	„	2	—	40	1	20	2	40
Хатӗр пул	„	1	—	30	—	90	1	80
Сборник приказов и распоряжений НКПроса	вырӑсла	1	—	30	—	90	1	80

Заготзерно Чӑваш республикӗнчи кантурне

кантурта тата районсенче ӗҫлеме

Инженер-строительсем, техник-строитель, аслӑ бухгалтӗрсем (руководительсем), аслӑ економист, счетовод, кассир-инкассатӑр

КИРЛӖ

Адрӗс: г. Чебоксары, ул. Калинина № 83, Республиканская контора В-О Центрозаготзерно.

3—1

ССР Союзӗн Вӑрман Халӑх Комиссариачӗн

Сарапулри автомеханиксене вӗрентсе хатӗрлекен техникум

Автотрактӑр уйрӑмне вӗренме кӗме ийунӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа зайавленисем йышӑнать. Условисене почтӑпа йараҫҫӗ.

Адрӗс: город Сарапул, УАССР ул. Гоголя 34. Механический техникум.

2—2

Уполномоченнӑй Чувашглавлита №309

Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 500.